45-37

Колхоз театрĕн библиотеки

Н. АЙЗМАН

# ЛИЗА КОРОТКОВА

Чăвашгосиздат
1945.

ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ

НИКОЛАЙ АЙЗМАН

# ЛИЗА КОРОТКОВА

4 ПАЙЛĂ, 5 КАРТИНĂЛЛĂ ПЬЕСА

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар □ 1945

*Драмкружоксенче ӗҫлекенсем!*

*Ҫак пьесăна вуланă е сцена ҫинче лартнă хыҫҫăн вăл сире епле кăмăла кайнине, пьесăра эсир епле ҫитменлĕхсем асăрханине тата сирĕн малашне епле пьесăсем лартас килнине Издательствăна ҫак адреспа ҫырса пĕлтерĕр: г. Чебоксары, Дом Печати, Чувашгиз.*

Отв. редактор Н. Т. Васянка

НТ 00103 Заказ № 10[7] Тираж 2000 Объем 4 печ. л.
Подписано к печати 5/V-1945 г.

Тип. № 1 Управления Полиграфпромышленности при СНК ЧАССР
г. Чебоксары.

## ВЫЛЯКАНСЕМ:

**Спиридон** — 70 çулхи старик, колхозник.
**Мархва** — унăн арăмĕ.
**Платон** — вĕсен ывăлĕ.
**Лиза** — Платон арăмĕ.
**Сохрон** — колхоз завхозĕ, малтан пахчаçă, унтан конюх пулнă.
**Пăртуççи** — унăн арăмĕ.
**Матрўне** — колхозница, кайран бригадир.
**Ваççа** — 14 çулхи бригадир.
**Горшков** — 17 çулта, бригадир.
**Солнцева** — учительница.
**Якур** — кулак ачи пулнăскер.
**Якраççи** — сăмах вĕçертме юратакан.
Нимĕç лейтенанчĕ.
Колхозниксем, колхозницăсем.
Пьесăри ĕç 1941 — 42-мĕш çулсенче пулса иртет.

### 1-мĕш пайĕ

#### Пĕрремĕш картина

Чаршав уçăличчен туй шавĕ янтăрать. Хуткупăс ташă кĕввин шăрантарать, паранпан тўнклетет, хушăран ханкăрмапа мăйай шăнкăравĕ сассисем илтĕнеççĕ. Туй халăхĕ туй юррисем юрлать.

Колхоз лаши — тур лаши (2 хут)
Тăват урипе кукалтет,
Чавса ылттăн кăларасшăн.
Ой, пичче Платон пур, —
Хур аçи пек кускалать,
Хăй Лизине курасшăн.
Ой-яра-рай-я, рай-я-ра...

Юрă аякка кайса лăпланать. Шăнкăрав сассисем те илтĕнми пулаççĕ. Чаршав уçăлать.

Спиридон пÿртĕнче. Ăшчикĕ тап-таса. Кантăксене яри уçса пăрахнă. Уçă кантăкран шап-шурă çĕмĕрт чечекĕн сапакисем пÿрте лле усăнаççĕ; чечексем витĕр урамри симĕс çерем курăнать. Пÿртре чаплă кроватьсем лараççĕ, стена çумĕнче пысăк сехет тата тĕрлĕрен портретсем çакăнса тăраççĕ. Чÿречесем çинче чечексем сарăлса лараççĕ. Сĕтел çинче сăра-эрех, савăт-сапасем.

Спиридонпа Мархва кĕреççĕ. Спиридон аллинче эрех кĕленчи, Мархва сăра витри йăтнă.

**Спиридон.** Ну, ăсатса пĕтертĕмĕр пулĕ...

**Мархва.** Темле кăмăл туса çитертĕмĕр ĕнтĕ. Вăтăр виçĕ урапа... (*Урамра юрлани илтĕнет.*) Кусем камсем тата?..

**Пăртуççи** (*юрласа кĕрет*):

Мĕншĕн каяс мар туя?
Конюх лаша кÿлсе пачĕ;
Колхоз лаши тур лаши,
Çилхи витĕр çил вĕрет...

**Мархва.** Конюх лаша кÿлсе пачĕ, тетĕн, ху каяймарăн им тата?

**Пăртуççи.** Вăл лашапа хĕрарăм пуççăн кам туя кайтăр! Кÿлсе тăратсан, колхоз килкарти тавра вуннă çаврăнчĕ пуль, аран анса тартăмăр. Ним тума та пĕлмест, ĕрĕхет!..

**Спиридон.** Сĕлĕ сиктерет мар-и ăна...

**Пăртуççи.** Ман хамăн старикех вăрçас килет. Пахчасимĕç пуçлăхĕ пулнă та ĕнтĕ, ниçталла та тапранмасть. Атя-ха, Сахрун, ватăла-киле тепре туя кайса курар, тетĕп. Çук, ним тусан та итлемест! Старик пулсан, çав лашана тытса чаратчех ĕнтĕ.

**Спиридон.** Халь ăçта вăл?

**Пăртуççи.** Ăçта пултăр... хăйĕн пахчинчех. Кунĕн-çĕрĕн çавăнта чакаланать.

**Спиридон.** Мархва, эсĕ Пăртуççи тăхлача ĕçтер-ха. Эпĕ Сахрун хăтана чĕнсе килем. Унсăрăн пĕр курка сăрасăрах хăварăпăр тата.

(Каять).

**Мархва.** Юрать, юрать.

**Пăртуççи.** Эх, Мархва тăхлачă! Сан ывăлна кам хисеплемест пулĕ, кам юратмасть пулĕ!..

**Мархва.** Ачи халиччен никама та усал туса курманччĕ та-ха...

**Пăртуççи.** Э-эй, мĕн каласси пур! Вăл ĕçлĕ çын пулнăранпа колхозра ĕçлесе мĕн чухлĕ ырлăх курмарăмăр пуль, мĕн чухлĕ савăнмарăмăр пуль? Тырри те çителĕклĕ, çи-пуçĕ те типтерлĕ. Тавтапуçах ăна — колхоз ĕçне йĕркелесе янăшăн. Унччен колхоз мĕнле пулнине ху астăватăн.

**Мархва.** Вăрлатчĕç çав. Ну, юрĕ-ха, эсĕ лар. Эпĕ сăра ăсса кĕрем. (*Каять.*)

**Пăртуççи.** Э-эй... Туй тесен, тукмак выртса йăваланнă, теççĕ те... (*Юрлать.*) „Эпир туя кайман-и, туй мыскари курман-и!“.

**Якраççи** (*кĕрет*). Ха-а, эсĕ пĕчченех туй тăватăн тем?

**Пăртуççи** (*туй юрри кĕввипех юрласа*). Пĕчченех-çке, пĕчченех, — эсĕ каймарăн-им тата?

**Якраççи.** Мана чĕнмен, чĕнсен те каяс çук. Якур сутĕнче суя сăмах сарнă, тесе, виççĕр тенкĕ штраф тӳлеттерчĕ те — çавăн туйне ма каятăп?

**Пăртуççи.** Вăл тахçан пулнă япалана манас та пулать ĕнтĕ.

**Якраççи.** Эпĕ ĕмĕрне те манас çук. Чĕренех лартрĕç.

**Пăртуççи.** Ху та этем ретлĕ пурăнмастăн та...

**Якраççи** (*вăрттăн кулать*). Хи-хи-хи!.. Эсĕ илтмен-и — Лизукăн çире пур, тет, вĕт.

**Пăртуççи.** Ан калаç. Камран, тет?

**Якраççи.** Платонранах, тет. Çавăнпа вĕсем туйне тума васканă... Лизине, йывăр çын пулнă пирки, Вутланри Урçа Унтрине тупса парас, терĕм те... çывăха та ямарĕ... алăкран тĕксех кăларса ячĕ...

**Мархва** (*сăра ăсса кĕрет*). Э-э, Якраççи те килнĕ тем?

**Пăртуççи.** Якраççийĕ килнĕ те-ха... Ырă хыпарпах килмен-ха вăл.

**Мархва.** Мӗн пулнӑ апла?

**Пӑртуççи.** Сирӗн кин пуласси пушӑлла килмест, тет.

**Мархва.** Кай... Ан тӗлӗнтерӗр.

**Якраççи.** Çапла, тет, çав.

**Мархва.** Кам каларӗ?

**Якраççи.** Камӗ-мӗнни... Лешкасри Лутра Лукари, Мӑн урамри Мӑнтӑр Маринирен илтнӗ, тет те... ӑна калаканӗ Саккул Сахарӗн арӑмӗ пулнӑ, тет.

**Мархва.** Çапла кин пулчӗ-и эппин? Ята çӗртет вӗт капла!

**Пӑртуççи.** Сӑмахне саракан̆ӗ Саккул Сахарӗн арӑмӗ пулнӑ, тет те-ха...

**Якраççи.** Кай, ахаль... Тен, Лизукӗ чиперех пуль, нимех те пулман пуль? Ахальренех мӗн тесе çын çинчен çавӑн пек сӑмах сармалла-ши?! Эпӗ хуть... топро...: Ун пек çын çинчен калаçма юратмастӑп та...

**Мархва.** Эпӗ хам та халиччен çын çинчен элек сарас шутпа çӑвар уçман.

**Якраççи.** Пурте пирӗн пекех пулсан, ялта шӑпах пулмалла.

**Мархва.** Сӑмаха пула сӑра çинчен мансах кайрӑмӑр пулас...

**Якраççи.** Ай, ма чӑрманатӑнах.

**Мархва.** Кил-ха, тыт. Тавтапуçах сана килсе систернӗшӗн. Ырӑ сӑмахах мар пулин те...

**Пӑртуççи.** Ну, каç ӗçнисене тавси.

**Мархва.** Ӗçтермен...

**Якраççи.** Тепӗр сӑрана ӗçес тесен те ӗçмелле мар, ку вара...

**Мархва.** Сӑри аван пулчӗ-ха... ӗç.

**Якраççи** (*Спиридонпа Сохрон килнисене кантӑкран курса*). Кай, ан тултар, çитӗ ӗнтӗ, тытах, каяс.

**Мархва.** Тепӗр курка ӗçсе парсам. (*Спиридонпа Сохрон кӗреççӗ.*)

**Спиридон** (*Якраççие курса*). Эсӗ мӗн ӗçлесе çӳретӗн кунта!? Марш! Ырӑ сӑмахпа тӑранса пурӑнаканӑн шӑрши

те ан пултăр кунта! (*Якраççи тухса шăвăнать.*) Пăх-ха ăна. Килнĕ кунта! Каллех мĕн те пулин лĕпĕртетсе хăварчĕ пуль-ха?

**Мархва.** Эсĕ, Спиридон, çынсем умĕнче чипер пул-ха...

**Спиридон.** Эпĕ юратман çын ман пата ура та ан ярса пустăр. (*Сохрона.*) Атя, иртех, Сохрон хăта.

**Сохрон.** Иртĕпĕр-çке...

**Спиридон** (*Пăртуççине*). Аран илсе килтĕм вĕт, ниепле те килесшĕн мар.

**Сохрон.** Ерçӳ çук та... Сывă-и?

**Мархва.** Чупатпăр-ха. Иртĕр. (*Пăртуççине*). Эсĕ тултармаллăх ĕç-ха, тăхлачă.

**Пăртуççи.** Ĕçсе тăрансан, пĕчĕк ача чухлĕ те ĕçейместĕп вара эпĕ.

**Сохрон.** Эпĕ хам та çавах. Выççăварла анать вăл. Мана карчăк каçхине апат пĕçерсе памарĕ те... Ну, эпĕ пăхкаларăм-пăхкаларăм та... пĕр тăпăрчă икерчипе çур чĕрес сĕт çавăрттарса хутăм та, выççăварлах выртса çывăртăм вара (*кулаççĕ*).

**Спиридон** (*Сохрона*). Эсĕ сĕтел патнерех лар-ха. Çак самантрах сан купăстуна никам та çисе каяс çук.

**Сохрон.** Купăстисем, çимелĕх çук та-ха вĕсем... Хушăран карчăк та кайса пăхкалĕ. (*Сĕтел патне ларать.*)

**Спиридон** (*черкке парать*). Кил-ха, тыт.

**Сохрон.** Вот эпĕ, ниепле те ăнланаймастăп. Мĕнле ĕçеççĕ çак усала çынсем, ненай. Ăна ĕнтĕ, çав терисех ĕçес килет пулсан, пĕрер черкке ĕçни те юрать (*ĕçет*). Ак çапла!

**Спиридон** (*тултарать*). Тыт-ха тепре.

**Сохрон.** Çынсем пур — стаканпа ĕçеççĕ... Ман шутпа ăна пĕчĕккĕн ĕçмелле те... (*ĕçет*). Ак çапла! (*аса илсе*). Эх, астуман та, тавсие!

**Спиридон.** Ĕçĕр-ха, тур калашшĕ виççĕ, теççĕ.

**Сохрон.** Хăшĕ-пĕрисем тăнне çухатаççĕ те, ыйтса ĕç ме пуçлаççĕ. Манăн ун пек ниепле те хăйăм çитес çук. Ăна ĕнтĕ, акă халь Спиридон хăта сĕнсе ĕçтернĕ пек ĕçтерес-

çĕ пулсан, ĕçни те юрать. Çапах та ытла пысăккăн мар. (*Ĕçет.*) Ак çапла!

**Пăртуççи.** Асту, Сохрон, купăста...

**Сохрон.** Купăста мар-ха, акă кунта студен пур, уçă апат.

**Спиридон.** Тыт-ха тепре (*черкке тыттарать*).

**Сохрон** (*ӳсĕрĕлерех*). Ну, Спиридон хăта, санăн кин пит аван çын пулчĕ-çке-ха...

**Спиридон.** Аван тесе илтĕмĕр ĕнтĕ.

**Пăртуççи.** Мĕн каласси пур. Лиза вăл сăн-питрен те картина пек, кăмăлĕ те çав тери аван. Ылттăнран та ылттăн кин!

**Спиридон.** Ылттăн пулмасăр. Иртнĕ çура мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунă вăл? Хĕр пуççăн бригадир пулса, пурне те тĕлĕнтерчĕ вĕт. Мĕн япала туянмарĕ пуль!

**Пăртуççи.** Мĕн япала туянмарĕ пулмасăр... (*юрласа ярать*).

Ой, шăллăм, Платон пур,
Кинĕм лайăх — Лиза пур,
Пирĕн кинĕн мĕн çук-ши?
Тул тулттарнă тăлап пур,
Патефонĕ, самовар...
Ой, тата мĕн калар!

**Сохрон** (*ӳсĕрĕлсе*) Ну, Спиридон хăта, манăн сан ывăлу пек ывăл пулас пулсан, эпĕ ывăла авлантарас та манăн кин те сан кин пекех аван пулас пулсан... Эпĕ ун сывлăхĕшĕн кашни апатрах пĕрер черкке ĕçнĕ пулăттăм (*ĕçет*). Ак çапла!

**Пăртуççи.** Купăста.

**Сохрон.** Купăс ăçтине пĕлместĕп-ха эп. Пире типĕлле те юрать, карчăк. Э-э-э-их!.. (*Ташласа сăвă калать.*)

Хоп касса, сăпка турăм.
Кин ачине сиктерме.
Юратмарĕ — хăй пуçларĕ
Яслинелле вĕçтерме.

(Пĕр икĕ хут çаврăнсан, урайне тирĕнсе каять.)

**Пăртуççи.** Ы-ы, усал! — ўкет тата! Кам хушать пуль çав териех ĕçме? Кашни ĕçмессеренех çавăн пек вара. Сасартăк ĕçсе тултарать те... Атя киле.

**Мархва.** Халех туй çавăрăнса килмелле. Кин енчен япала леçме килеççĕ пуль. Çавсене курмасăрах каяс тетĕн-и? Спиридон, эрехне ĕçтер-ха.

**Пăртуççи.** Кай, пулмастех. Сăра эрехсем ĕçсе ларсах штрафсем илсе ларас мар. Туй сассине илтсен хамах чупса килетĕп. Халь çав пахчана кайса пăхам-ха. Ку выртать пулĕ ĕнтĕ. Ах, чун тарăхтармĕш... (*Каять.*)

**Мархва.** Итле-ха, старик, туйне тăвасси тăватпăр та, пирĕн кин пуласси..

**Спиридон.** Мĕн?

**Мархва.** Пĕччен килес вырăнне иккĕн килет, тет...

**Спиридон.** Кам каларĕ?

**Мархва.** Çапла теççĕ...

**Спиридон.** Кам каларĕ?

**Мархва.** Камĕ-мĕнни... халь çех...

**Спиридон.** Эсĕ кам каланине кала! Якраççи пуль-ха?

**Мархва.** Çавă та-ха...

**Спиридон.** Каллех килсе лепĕртетрĕ-и? Вăл ăçтан илтнĕ?

**Мархва.** Ăна-кăна ыйтмарăм та... Э-э, Саккул Сахар арăмĕ каланă, тет пулас...

**Спиридон.** Суя!

**Мархва.** Чăн та çапла, тет. Пирĕн Платонĕ те çавăнпах авланма васканă, тет.

**Спиридон.** Суя. Якраççин пĕр сăмахне те ĕненместĕп.

**Мархва.** Тен, чăнах пулĕ...

**Спиридон.** „Чăн-чăн!“ Вăл каллех мĕн те пулин шухăшласа кăларнă пулĕ-ха.

**Мархва.** Мĕн шухăшласа кăларнă пулĕ ара...

**Спиридон.** Пăрах палкама!

**Мархва.** Ял-йыш умĕнче намăс. Камăн кинĕ? Çавăн кинĕ пурăннă-пурăнманах çуратса та панă, тейĕç.

**Спиридон.** Мĕнех вара? Мĕн усалли пур ун çумĕнче?

Асанне текенни çех хăвăртрах ӳсет. Кин ача çуратнинчен мĕн тĕлĕнмелли пур? Эпир иксĕмĕр тепĕр пилĕк çултан ача çуратса парсан акă—яла калаçмалăх пулĕччĕ. (*Урамра туй юррисем илтĕнеççĕ.*) Акă, урам тăрăх чупма тухрĕç пулас. Атя-ха çӳхрепе, сăра ăсса хатĕрлер. Ну, мĕн хытса тăратăн тата? (*Каяççĕ.*)

**Пăртуççи** (*кĕрет*). Халь те кунтах выртать тем? Сахрун! Сахрун, тетĕп. Тăр-ха, тăр. Купăстана пĕтереççĕ вĕт капла. Тахăш эсремечĕ алăкне уçса хăварнă та, кĕçех выльăхсем кĕрсе тулман. Тăр, тенĕ сана (*лăскать*).

**Якур** (*кĕрет*). Ман килес.

**Пăртуççи.** Тур çырлахах! Якур, эсĕ мар-и ку?

**Якур.** Епĕ. Мĕн тĕлĕнетĕн?

**Пăртуççи.** Ăçтан килтĕн эсĕ капла?

**Якур.** Тĕрмерен. Мантăр-им мана ăçта ăсатнине? Ну, мĕнле пурăнатăр?

**Пăртуççи.** Аван пурăнатпăр.

**Якур.** Платон тăрăшать эппин?

**Пăртуççи.** Тăрăшмасть теме çук. Такамран ыйтсан та çаплах калĕ. Ăна ĕнтĕ районĕпех палласçĕ те... Районĕпе çеç мар, Мускавра та пĕлеççĕ, тет те...

**Якур.** Ха.. Чапа тухрĕ пулать, ăçтиçук!

**Пăртуççи.** Ĕлĕк апла пулнă пулĕ те, халь пырса пăх-ха эсĕ ăна.

**Якур.** Ĕлĕк мана вăрçатчĕ, тĕрмене хуптарчĕ, анчах халь хăй те туртать пулас-ха.

**Пăртуççи.** Никамран та пĕр сăмах та илтмен. Пĕтĕм ялйыш юратать ăна. Эсĕ кайнăранпа мĕн-мĕн туянмарĕç пуль. Платон пулман пулсан — Мускава та кайса курас çукчĕ, теççĕ.

**Якур.** Камсем?

**Пăртуççи.** Пурте. Акă, хамăр Элексçи ĕçкеех илер-ха. Хăй ĕмĕрĕнче ниçта тухса курманскер, лашасене лайăх пăхнăшăн Мускава кайса килчĕ вĕт. Унпа пĕрле тата Матви Васили Васси — пăрусене лайăх пăхнăшăн, Лиза — бригадирта лайăх ĕçленĕшĕн Мускава кайса килчĕç.

**Якур.** Ăнах-и?

**Пăртуççи.** Ой, мĕн каласси пур! Халь тата лашасене валли тем вăрăмĕш вите туса лартрĕç. Клуб турĕç. Столовăй...

**Якур.** Правлени халь те ман пӳртрех-и?

**Пăртуççи.** Çук, çĕнĕрен турĕç.

**Якур.** Хушса хăварнине мĕншĕн тумарăн? Мĕн чĕнместĕн, а? Мĕншĕн тумарăн? Çавна тĕртме пĕр шăрпăкна хĕрхентĕн-и? Тавай тырра каялла. Çук-и? Çисе ятăн-и? Сутрăн-и? Пӳрт лартрăн-и?.. Çавна каллех тĕртмесен, каятăп та хăвăн çуртна тĕртсе яратăп.

**Пăртуççи** (*хăраса*). Сахрув!

**Якур.** Шăп.

**Пăртуççи.** Ял-йыш!.. (*Туй сасси илтĕнет.*)

**Якур.** Кăшкăрса кама хăратас тетĕн? Ухмах! Эсĕ халь ман алăра (*каять*).

**Пăртуççи.** Тур çырлахах. Мĕнле танатана кĕрсе ӳкрĕм эпĕ? Ăçтан çавăрăнса çитрĕ ку! Мĕн тăвас-ши? Пуçа ăçта кайса чикем-ши? (*Каять.*)

**Сохрон** (*калаçнисене итлесе выртса урăлсах кайнă, ура çине тăрать.*) Тĕлĕк куртăм-и эпĕ, е чăн-чăнах пулчĕ-и? Мĕнле тырă çинчен юмахларĕç вĕсем? Ав епле иккен ман арăм! Тырри арăм ĕçлесе илнĕ тырă мар, вăрланăскер пулнă! А эпĕ вăл тырăпа пӳрт лартрăм. Хам икĕ çул Вăрнаулта пурăннă вăхăтра вăл яшсемпе аташса пурăннă иккен. Çава патне: уйăрлатăп. Кĕçĕрех уйăрлатăп. Анчах халь ăçта кайрĕç-ши вĕсем? Ну, юрать, халь шарлас мар-ха. (*Спиридонпа Мархва кĕреççĕ. Туй сасси çывăхарать.*)

**Спиридон.** Çăкăрпа хирĕç тухса илес. Ăçта, хатĕрлерĕм, терĕм-çке. (*Çăкăр, ун çинче пӳремеç, пӳремеç çинче чăкăт. Мархвана парать.*) Сохрон хăта, эс пĕр витре сăра йăт-ха, эпир, Пăртуççи кинпе, пир сарар. Пăртуççи кин ăçта тата?

**Сохрон** (*шухăша кайнăскер*). Вăл тепĕр туя кайрĕ пулас-ха. Эпĕ ăна халех çавăтса килеп.

**Спиридон.** Çук пулсан, çук пултăр. Унсăрăнах майлăпăр.

**Сохрон.** Эпĕ ăна... (*Кайма тăрать.*)

**Спиридон.** Ан кай, ан кай. Пурпĕр ĕлкĕрейместĕн.

**Сохрон.** Ĕлкĕретĕп-и, ĕлкĕрейместĕп-и... (*Каять.*)

**Спиридон.** Тем çилленнĕ тата ку? Халь те тăраниччех ĕçтертĕмĕр-çке. (*Туй çĕмĕрĕлсе çитрĕ.*) Сана мĕн, чĕмере тытрĕ-и тата? Мĕн чĕлхӳне сыртрăн? (*Мархва чĕнмест. Тулта юрлани илтĕнет.*)

Хĕр япали хĕрĕх пăт,
Пирĕн аппан — аллă пăт,
Алă пинне памасăр,
Сире парса хăвармастпăр.

Сакăр метр сар лента —
Сар лашана тилхепе,
Метр çурă пирĕн — аппа
Сар йыснана сар хĕвел!

**Горшков** (*тӳшек çĕклесе кĕрет те кровать çине пăрахать*). Ĕлĕк-авал тӳшеке ампара сарнă тет, пире юрать пӳртре те... (*Алăкалла кăшкăрать.*) Ан ярăр, ан ярăр, тытăр ăна!.. (*Тула тухса, Васçана йăтса кĕрет.*) Малтанхи ачи ывăл пултăр (*тӳшек çине лартать*). Ывăл пултăр та — сарă пултăр (*татах çĕклесе лартать*). Сарă пултăр та — кăтра пултăр (*татах çĕклесе лартать*).

**Васçа.** Ай-ай!.. ай-ай!.. (*Юри макăрнă пек туса тухса тарать. Хĕрупраçсем кантăкран кармашса пăхаççĕ.*)

**Горшков.** Ĕлĕк-авал çĕнĕ çынпа упăшкине ампара хупнă тет, пире юрать пӳрте те!.. (*Алăка уçса.*) Кĕрĕрех! (*Тултан Çпиридон, Мархва, вĕсем хыççăн Платонпа Лиза, унтан Матрӳне, Васçа тата ыттисем те кĕреççĕ. Якраççи чи кайран кĕрсе, çынсене сирсе, мала тухса тăрать.*)

**Горшков** (*Якраççие*). Эсĕ мĕн, мăн кĕрӳ арăмĕ выранне пултăн-им?

**Якраççи.** Эсĕ ху кам вырăнне?

**Спиридон.** Килĕрех, ачамсем, иртĕр. (*Платонпа Лиза сĕтел патне пырса, чĕркуçленсе, пуçĕсене сĕтел ури патне таяççĕ. Спиридонпа Мархва сĕтел хушшине кĕрсе тăраççĕ те, аллисене курка тытса пиллеме пуçлаççĕ.*) Уй пек аслă пулăр, вăрман пек хунавлă пулăр. Пĕр-пĕрин сăмахĕнчен ан тухăр. Пĕр-пĕрне юратса пурăнăр. Ĕçрен нихçан та ан пăрăнăр. Ну, ман каласа пĕтрĕ. (*Пауза.*) Амăшĕ, каласам ĕнтĕ.

**Мархва** (*çиленерех*). Шыв патне кайсан ан палкаса тăр. Ваттисен халапне итле. Эпир каламаннине хăвăр астуса илĕр. Кин, кил, ĕçсе пар (*сăра парать*).

**Спиридон** (*эрех парса*). Кил, Платон, тыт. (*Платонпа Лиза ĕçеççĕ те черккепе куркине сĕтел çине лартаççĕ.*)

**Якраççи** (*хĕрсене*). Пăхăр-ха, пăхăр, кăкăрпа сывлать, кăкăрпа сывлать!..

**Хĕрсем.** Кай, суя пуль.

**Якраççи.** Пĕтĕм ялĕпе пĕлеççĕ.

**Спиридон.** Ĕнтĕ ларăрах, калаçăр. (*Платонпа Лиза сĕтел хушшине кĕрсе лараççĕ.*) Ну, туй халăхĕ, ташлăр, юрлăр! Пирĕнтен ирĕк!

**Горшков.** А ну-ка, купăссă! — тăс-ха пĕрре купăсна... (*Купăссă купăс калать, Горшков ташлать. Кăштах ташласан, ыттисем тухаççĕ, виççĕн-тăваттăн пĕр харăс ташлаççĕ. Тата хĕрсе çитсен Солнцева чупса кĕрет.*)

**Солнцева.** Юлташсем! Юлташсем, чарăнăр-ха!

**Платон.** Мĕн пулнă, Рита Родионовна?

**Солнцева.** Ой, сывлăша çавăрса илейместĕп.

**Платон.** Мĕн, пушар-и?

**Солнцева.** Вăрçă пуçланнă!

**Пурте.** Вăрçă?

**Солнцева.** Вăрçă!

**Пурте.** Камсем тапăннă пире?

**Солнцева.** Нимĕçсем!

(*Пурте хытса тăраççĕ.*)

ЧАРШАВ.

## 2-мӗш картина

Фронт. Малти лини. Çемӗрӗлнӗ танк çумӗнче Платонпа Якур вырнаççӗ. Вӗсем — наблюдательсем. Çывӑхрах снаряд çурӑлнисем илтӗнеççӗ.

**Якур** (*бинокльпе пӑхса*). Нимӗн те курӑнмасть. (*Пауза.*)

**Платон** (*телефонпа*). Вунпиллӗк, вунпиллӗк-и ку? Пиллӗк калаçать...

**Якур.** Кашкӑр хускала пуçларӗ.

**Платон** (*телефонпа*). Кашкӑр хускала пуçларӗ, кашкӑр хускала пуçларӗ... (*Пауза.*) Пуçлӑр!.. (*Тупӑ сасси.*) Çитеймерӗ. (*Тупӑ сасси*). О-и, сылтӑмарах. (*Тупӑ сасси.*) Есть. Юрать... (*Пауза.*)

**Якур.** Аван ислетеççӗ. (*Танк сассисем илтӗнеççӗ.*) Танксем тухрӗç.

**Платон** (*бинокльпе пӑхса*). Пӗрре, иккӗ, виççӗ... ултӑ танк. Асту авантарах.

**Якур.** Юрать!

**Платон** (*телефонпа*). Вунпиллӗк, вунпиллӗк. Пиллӗк калаçать. Сулахай енчен нимӗçсен ултӑ танкӗ тухрӗç. А? Юрать! (*Тупӑ сассисем.*) Малтине лекрӗ. (*Тупӑ сассисем.*) Чарӑнчӗ. (*Тупӑ сасси.*)

**Якур.** Теприне лекрӗ. Ай-ай маттур пирӗн артиллеристсем! Чим-ха, пӑх.

**Платон.** Вӑрманалла пӑрӑнчӗç (*телефонпа*). Вунпиллӗк, вунпиллӗк, вӑрманалла тытрӗç...

**Якур.** Çухалчӗç. (*Автоматсен сасси.*)

**Платон.** Вырт. Ан тапран. Пирӗн тӗле тупрӗç пулас. Илтетӗн-и, çулçӑсем епле калаçма тытӑнчӗç.

**Якур.** Пӗтетпӗр пулӗ, Платон.

**Платон.** Çырт шӑлна!

**Якур.** „У" çинчи йывӑç тӗммисем хускала пуçларӗç.

**Платон** (*телефонпа*). Вунпиллӗк, вунпиллӗк... Вунпиллӗк!.. Шарламаççӗ. Мӗн шуйттанӗ пулчӗ? Провода татрӗç-ши вара? (*Якура*) Çаплах шӑваççӗ-и?

**Якур.** Шăваççĕ.

**Платон.** Лайăхрах сăна. Эпĕ халех лини тăрăх каятăп. Ăçта мĕн пулнă... (*Хырăмпа шăвать те провода татнине тупать.*) Кунтах, кунтах таталнă (*васкаса сыпать*).

**Якур** (*шăппăн*). Мĕншĕн леререх таталман-ши? (*Автомат сасси.*)

**Платон.** Майларăмăр... (*каялла хăйĕн вырăнне шăвать*).

**Якур.** Асту эс.

**Платон.** Ах!.. Ак тамаша... Манăн хăрах пӳрне çук-çке!

**Якур.** Амантрĕç-и?

**Платон.** Татса кайнă... (*чăмăртаса тытать.*)

**Якур.** Сестрана чĕнес-и?

**Платон.** Кирлĕ мар.

**Якур.** Мĕншĕн кирлĕ мар? Ну, чуп эппин часрах сестра патне.

**Платон.** Çых-ха хăвăртрах.

**Якур.** Ну, телей вара санăн! Киле каятăн ĕнтĕ.

**Платон.** Çых, ан калаç.

**Якур.** Ыратмасть-им?

**Платон.** Çых, ан калаç (*тăшман еннелле пăхать.*)

**Якур** (*çыхса пĕтерсе*). Ну, яра пар.

**Платон.** Ăçта?

**Якур.** Госпитале.

**Платон.** Çав хăрах пӳрнешĕн-и?

**Якур.** Татсах кайнă вĕт.

**Платон.** Пуçа татса кайни мар вĕт вăл! Пĕчĕк сураншăнах госпитале кайса выртсан — çапăçса та юлаймăн.

**Якур** (*хăйне хăй*). Пĕччен юлас тенĕччĕ, пулмарĕ.

**Платон.** Госпиталь çинчен сахалтарах шухăшлас пулать, Якур...

**Якур** (*юри*). Эпĕ юнран çав тери хăратăп...

**Платон.** А эсĕ ан хăра.

**Якур.** Пĕрремĕш хут-çке.

**Платон.** Вĕренетĕн ак (*телефонпа*). Вунпиллĕк, вунпиллĕк. Пиллĕк калаçать. Нимĕн те курăнмасть. Вырăн-

тах. А? Лешĕ паçăрах вăрмана чăмрĕ. Çавăрса илесшĕн мар-и? а? Есть (*трубкăна хурать*).

**Якур.** Нимĕçсем темĕн хатĕрленеççĕ пулмалла. Шăпланчĕç. Çўçенмелле, хăрушă.

**Платон.** Хăрушă та хăрушă. Тупнă пĕр сăмах. Мĕн шуйттанĕ тума санпа лекрĕм эпĕ.

**Якур** (*юри*). Эсĕ ан вăрç-ха, Платон. Тем эпĕ хумханатăп. Ăш вăркать. Мана пĕрре те сывă юлассăн туйăнмасть.

**Платон.** Виçĕ кун çапăçман. Ыррăн пĕр нимĕçе вĕлермен, вăл вилĕм çинчен шухăшлать. Эпĕ, акă, пурăнас, тетĕп. Малашнехи пурнăçшăн çапăçатпăр та.

**Якур.** Çапла та...

**Платон.** Якур, эпĕ сана, никам та илтмен чухне каламха. Килте тўшек çинче вилме çав тери хăрушă, тет. Эсĕ илтнĕ-и?

**Якур.** Мĕншĕн?

**Платон.** Мĕншĕн тесен, вилĕме ху кĕтсе выртатăн. Паян вилетĕп-и, ыран вилетĕп-и, тетĕн. Кунта, кунта пĕрре те ун пек мар. Кунта вилĕм çинчен мар, пĕрехмай вĕлересси çинчен шухăшлас пулать... Çапла-и?

**Якур.** Юрать эсĕ хытă чĕреллĕ те...

**Платон** (*бинокльпе пăхса*). Мĕскер çавăнта йăшăлтатма тытăнчĕç.

**Якур.** Ăçта?

**Платон.** Тигр çинче.

**Якур.** Курмастăп-çке.

**Платон.** Курмастăп? (*телефонпа*) Вунпиллĕк, вунпиллĕк! Тигр хыçкаланма пуçларĕ. Куратăр-и? Есть! (*трубкăна хурать*) Ну-ка, вырт-ха телефон патне. Санăн куçна вилĕм хупăрласа илнĕ пулас. Ну!

**Якур.** Есть (*телефон патне выртать, Платон сăнать*).

**Платон.** Тĕлĕнетĕп эп санран, Якур. Ялта чухне эсĕ çав тери паттăрччĕ-çке.

**Якур.** Эсĕ çав тери йăвашчĕ.

**Платон.** Эпĕ халĕ те йăваш. Анчах, мана вĕлерме тапăнаççĕ пулсан...

**Якур** (*пауза.*) Киле çыру çыратни?

**Платон.** Халь çинех çыраймарăм-ха.

**Якур.** Мĕнле чăтатăн эсĕ?

**Платон.** Ман пуçра вăл шухăш мар-ха. Вилмесен пурĕпĕр таврăнăпăр. (*Кулса*) Нумайтарах пурăнсан, лайăхрах кĕтсе илĕç. Çапла-и?

**Якур.** Çапла та... Манăн кам патне çырас?! Санăнни пек çамрăк арăм пулсан...

**Платон.** Чăнах, килти аван пурăннă вăхăтсене аса илсен, çырас килет ĕнтĕ, анчах вăхăт çук. Авланас умĕн-ха вăл... Май уйăхĕн вĕçĕнче... Çав тери тӳлек каç пулчĕ. Тӳпере шурă пĕлĕт татăкĕсем унта-кунта курăнаççĕ. Пĕр сас-хура та çук. Урамра шăп. Шап-шурă çĕмĕрт сапакисем пĕр хусканмасăр, ырă шăршă сарса, картасем урлă усăнса тăраççĕ. Кая юлнă пыл хурчĕсем хăйсен вĕллисене пĕрерĕн-пĕрерĕн пыл йăтса таврăнаççĕ. Сайрахутра мăнçул çинче иртекен машина сассисем илтĕнеççĕ. Йĕри-тавра шăп. Эпĕ хамăр пахчари кӳлĕ хĕррине тухрăм та, алăра сĕрме купăс... Тытăнтăм чăваш юррисене шăрантарма... Каштах вылясан, ман купăс сассине илтсе, Лиза пырса тăнă. Вăл яланах купăспа пĕрле юрлама юрататчĕ. Вăл ыйтнипе эпĕ вара „Вĕлле хурчĕ“ тăсса ятăм... вăл вара ăш каниччен юрларĕ. Унăн юрри инçе-инçе, çырма тăрăх кайса вĕçленчĕ. Вăт, Якур! Тăват-пилĕк çул пĕр-пĕрне юратса пурăннă пулин те, çав каçхине тин... „Эпĕ сана ытарма çук юрататăп“ терĕ.

**Якур.** Чăнах та, ăша вăркатакан вăхăтсем пулнă ĕнтĕ. Ч... саванăçлă кунсем.

**Платон.** Çапла, çав савăнăçлă кунсене нимĕçсем пĕтересшĕн. (*Снаряд сасси.*) Ку мĕн?

**Якур.** Нимĕçсем пуçларĕç. Атака пуçланать пулмалла.

**Платон.** Ан çухалса кай, асту. (*Снаряд сасси.*) Тапранчĕç, пурте тапранчĕç. Систер.

**Якур** (*телефонпа*). Вунпиллĕк, вунпиллĕк, пиллĕк кала-

çать. Пурте тапранчĕç. Пурте тапранчĕç. Вунпиллĕк, вунпиллĕк, пурте тапранчĕç.

**Платон.** Асту. Йĕркеллĕ передавать ту.

**Якур.** Юрать.

**Платон.** Тигр лапа тăрăх вăрмантан вĕçтерет.

**Якур** (*телефонпа*). Вунпиллĕк, вунпиллĕк. Тигр лапа тăрăх вăрманалла вĕçтерет. Кĕтсе илĕр. (*Автомат сасси.*)

**Платон.** Кашкăр танкĕсем тапранчĕç.

**Якур** (*телефонпа*). Вуниккĕ, вуниккĕ...

**Платон.** Вуниккĕ мар, вунпиллĕк!..

**Якур.** Вуниккĕ, вунпиллĕк...

**Платон.** Кай телефон патĕнчен. Асту. Хам калаçатăп. (*Якур, телефон трубкине Платона парать.*)

**Якур.** Юрать. (*Сăнама выртать*).

**Платон** (*телефонпа*). Вунпиллĕк, вунпиллĕк... Кашкăрăн танкĕсем тапранчĕç, а? Есть. (*Автомат сассисем.*)

**Якур.** Вĕçĕ-хĕррисĕр пуля вĕçме пуçларĕ.

**Платон.** Вырт, ан тапран. Хытă асту.

**Якур.** Танксем кунта çывăхараççĕ.

**Платон** (*телефонпа*). Кашкăр танкĕсем пирĕн пата çывăхараççĕ.

**Якур.** Десант!..

**Платон.** Десант.

**Якур.** Тĕме енчен татах танксем тухрĕç.

**Платон** (*телефонпа*). Татах танксем тухрĕç. Куратăр-и? Есть. (*Сасартăк винтовка, автомат, пулемĕт сассисем янрама пуçлаççĕ.*) Пуçланчĕ.

**Якур.** Тарар-и, Платон?

**Платон.** Вырт, ухмах!

(*Урра кăшкăрни илтĕнет.*)

**Якур.** Вилетпĕр, Платон.

**Платон.** Шăлна çырт.

**Якур.** Пирĕн çине килеççĕ.

**Платон.** Ăçта?

**Якур.** Акă, тĕмесем патĕнче. Вуннăн та пулĕ.

**Платон.** Хатĕрлен.

**Якур**. Çывăхараççĕ.

**Платон** (*перет*). Пĕри пулчĕ (*тепре перет*). Тепри те пулчĕ (*Якура*). Пер. Ухмах. Мĕн чĕтресе ӳкрĕн (*перет*). Тепре пер! Леш енчен ан яр. Пер.

**Якур**. Вĕлереççĕ.

**Платон**. Пер!

**Нимĕç сасси**. „Русь, сдавайсь“.

**Якур**. Пĕтрĕмĕр. (*Винтовкине пăрахать те, аллисене çĕклесе, нимĕçсем еннелле чупать.*)

**Платон**. Эх, эсĕ, эсрелĕ!.. (*Якура перет. Якур ӳкет те упаленсе тарать.*)

**Нимĕç сасси**. „Русь... сдавайсь!“.. (*Нимĕçсене перес тесе çавăрăннă вăхăтра нимĕçсем Платона персе амантаççĕ те, вăл тирĕнсе каять. Лешсем йывăç тĕммисем хыçĕнчен сиксе тухаççĕ.*)

**Нимĕç лейтенанчĕ**. Хендэ хох.

**Платон**. Мейĕр, чыхăнăр! (*Граната пăрахать.*)

Нимĕçсем пурте сирпĕне-сирпĕне каяççĕ. Платон тăма хăтланать те ӳкет. Нимĕç лейтенанчĕ Платон патнелле хырăмпа шăвать. Платон ăна хирĕç шăвать. Нумайччен асаплана-асаплана пĕр-пĕрин патнелле шăваççĕ, шуса çитсен сасартăк тытăçса ӳкеççĕ. Нимĕç лейтенанчĕ Платона аяла тăвать. Платон тăшмана хăй çинчен ывăтса ярать. Пауза. Иккĕшĕ те пуçĕсене çĕкле-çĕкле пăхаççĕ, анчах иккĕшĕн те вăйĕсем çук. Платон юлашки вăйне пухса, чĕркуççи çине тăрать те нимĕç лейтенанчĕ çине сиксе ларать.

**Платон**. Халех пырна кăшласа тататăп.

ЧАРШАВ.

## 2-мĕш пайĕ.

Суяталăк иртсен. Декораци малтанхи пайĕнчиех. Мархвапа Якраççи сĕтел хушшинче апат çисе лараççĕ.

**Якраççи** (*ĕнентерсе*). Çыруне вара... Якурĕ, Лиза ячĕпе мар, Рита ячĕпе янă, тет.

**Мархва**. Суятăн пулĕ эсĕ, кам каларĕ сана?

**Якраççи**. Камĕ-мĕнĕ... Лешкасри Лукка Лукерийĕ, Кĕ-

ҫӗн Кӗҫтинккин арӑмӗнчен илтнӗ, тет те... ӑна калаканӗ Якку Якур арӑмӗ пулнӑ, тет.

**Мархва.** Суятӑн пулӗ, кай. Пирӗн кин йывӑр ҫын тесе те суйрӑн та...

**Якраҫҫи.** Ӑна эпӗ мар. Ӑна Саккул Сахар арӑмӗ ят сарчӗ. Ахальренех мӗн тесе ҫын ҫинчен сӑмах сармалла-ши. Эпӗ, хӑть, тепре каласан, ун пек ҫуралман та... Ҫын ҫинчен калаҫма юратмастӑп... Кӗҫӗрхи сӑмах пӗрре те суя мар вара. Кину, Якур тавӑрӑннине илтсенех, хӗпӗртесе ӳкрӗ, тет.

**Мархва.** Якур тавӑрӑннӑ-и вара?

**Якраҫҫи.** Халӗ ҫеҫ килсе ҫитнӗ, тет.

**Мархва.** Ах тур, Платон ҫинчен ыйтса пӗлесчӗ.

**Якраҫҫи.** Ыйтса пӑхрӑм. Нимӗн те пӗлместӗп, тет. Вӑрҫа кӗнӗренпе те курман, тет. Платон килмесенех, Якура качча тухатӑп, тесе калаҫса ҫӳрет, тет. Сире икӗ ватта шӑхӑртса хӑварать акӑ. Якурӗ персе ҫитрӗ ӗнтӗ.

**Мархва.** Платонӗ пӗтрӗ пулӗ ӗнтӗ. Тыткӑна лекрӗ пулсан, асаплантарсах вӗлерчӗҫ пулӗ.

**Якраҫҫи.** Асаплантараҫҫӗ тесе суйса калаҫҫӗ пулӗ-ха. Эпӗ хам кайсах курман та... Якур калать...

**Спиридон** (*сӳсменсем йӑтса кӗрет*). Тулта куҫ курми пулчӗ...

**Якраҫҫи** (*Спиридонран хӑраса*). Эпӗ кӑвас чусти патне тесе килсеттӗм те...

**Спиридон.** Эпӗ сана парам „кӑвас чусти".

**Якраҫҫи.** Ай турах, кунта... (*тухса шӑвӑнать*).

**Спиридон.** Пӑх-ха эсӗ ӑна, кунта килнӗ тата... Мӗн шуйттан тума кӳртетӗн эсӗ ҫавна?

**Мархва.** Ҫынна килнӗ килменех хӑваласа кӑларса ярас тетӗн-им?

**Спиридон.** Тата мӗн те пулин килсе лӑркаса хӑварчӗ пулӗ-ха. (*Якраҫҫи кантӑк умӗнчен иртет.*) Ӳ-ӳ, хӳресӗр шуйттан!..

**Мархва.** Шуйттанӗ хамӑр килтех пурӑнать ав. Кӗҫ тул ҫути килмелле, вӑл халӗ те ҫук.

**Спиридон.** Правленинче пулĕ.

**Мархва.** Правленинче, хăйĕн савнипе ларать пуль-ха. Ăна кунта апат çиме кĕтсе лар.

**Спиридон.** Эсĕ çав кине кăшлама пăрахатăн-и хăçан та пулин е пăрахмастăн-и? Асту эпĕ санăнне тутуна çăралатăп. Мĕнле савнисем тупнă эсĕ тата? Çыннин ахаль те пуç çурăлать пулĕ, темĕн чухлĕ ĕç, а вăл татах.

**Мархва.** Яшки вут çинчех. Килсен çиет-и, çимест-и çав, улпут.

**Спиридон.** Эсĕ татах урлă-пирлĕ-и? Тухса вырт.

**Мархва.** Курăн-ха (*каять*).

**Спиридон.** Çакăн пек йывăр вăхăтра, çамрăк çынна пулăшас чухне, вăл кунĕн-çĕрĕн лăркаса çÿрет, мĕн çитмест çав хĕрарăма...

**Сохрон** (*кĕрет*). Ман килес.

**Спиридон.** Килех. Иртсе лар.

**Сохрон.** Ларса тăма... Эпĕ сÿсменсем патне.

**Спиридон.** Нумаях юлмарĕ та-ха... Паян кунĕпех юсарăм та, пĕтерейменнине пÿрте илсе кĕтĕм-ха.

**Сохрон.** Лизавета Ивановна халĕ те тавăрăнайманим-ха!

**Спиридон.** Пушанаймарĕ пулĕ-ха. Хĕрарăм пуçăн председательте ĕçлеме... хурçă пек чун кирлĕ.

**Сохрон.** Халĕ те хытă тапаланать те-ха..

**Спиридон.** Эпĕ, хам ĕçлĕ çын пулса ĕçлесе курнă та, йывăрлăхне туятăп. Ку, кин, çамрăк-ха. Хăнăхман. Ĕнер, каçхине, вырăн çине тăрса ларчĕ те пĕчĕк ача пек макăрать. Эсĕ, кин, Платоншăн макăратăн-и ара, тетĕп те: „Çук, уншăн мар, атте, ман хамăн ĕçсем ăнмаççĕ-ха," тет. „Акă, ыран, чукун çулĕ çине сакăр çын ямалла", тет. „Çыннисем, колхозри васкавлă ĕçсене тума та кирлĕ", тет. Да... Ну, аптăрамĕ, вĕренет ак. Ĕçлеме юратать, ăспуçĕ çителĕклĕ. Пĕччен мар вĕт. Хамăр актив пулăшать тата районран килсе пулăшсах тăраççĕ. (*Алăк сасси.*) Акă хăй те çитрĕ пулас.

**Лиза** (*кĕрет*). Ой, пĕтĕмпех ывăнтăм паян (*Сохрона*), Эсĕ ман пата-и?

**Сохрон.** Çук, эпĕ, ак, сӳсмен патне.

**Лиза.** А-а, юрать, юрать. (*Спиридона*). Юсамаллисем нумай юлчĕç-и?

**Спиридон.** Халех пĕтеретĕп ĕнтĕ. Чӳлĕкĕсене тирмелле çеç.

**Лиза.** Ой, çав тери ывăнтăм.

**Спиридон.** Апат çиетни, кин?

**Лиза.** Çук, çиес килмест. Самоварта шыв пур-ши?

**Спиридон.** Пур, кин, пур (*Сохрона*). Эсĕ тиркеле-ха. Эпĕ халех.

**Лиза.** Ан тăр ĕнтĕ, эпĕ хамах (*самовартан шыв юхтарать те хаçат вулама ларать, çав хушăрах чей ĕçет*). „Нимĕççем Сталинград патне çывхараççĕ". Мĕн тумалла малашне?

**Спиридон.** Пĕтĕм вăя хурса, шăла çыртса ĕçлес пулать.

**Лиза.** Вăл çапла та-ха...

**Спиридон.** Ну, ыран ăçта каймалла турăр-ха?

**Лиза.** Каймаллисем туллиех те, çыннисем çук.

**Спиридон.** Тупас пулать.

**Лиза.** Тупас пулатне ăна эпĕ пĕлетĕп, анчах çĕр тĕслĕ ĕç. Ырашне вырмалла, кĕлтине кӳртмелле, вăрлăхне çапмалла, тыррине акмалла... Çав вăхăтрах сухалас пулать, сӳрес пулать, государствăна тырă леçес пулать, чугун çулĕ çине ярас пулать. Хăшне туса çитерес?

**Спиридон.** Уй ĕç планĕ тунă вĕт эсир.

**Лиза.** План! План вăл хальхи вăхăтра паян пур та ыран çук. Ак, иккĕмĕш бригадăра сеялка çумне Трихванпа Тихăна çирĕплетнĕччĕ, 3-мĕш бригадăра Иванпа Çемене. Халь ăçта вĕсем?

**Сохрон.** Çеменĕ килтех пурăнать та-ха...

**Лиза.** Михала армине кайсан, ăна бригадир тума лекрĕ. Хăвăр нимĕн те пĕлместĕр, калаçатăр.

**Спиридон.** Çилленме кирлĕ мар.

**Лиза.** Эпĕ никам çине те çилленместĕп, хама-хам тарăхатăп çеç.

**Спиридон.** Эсӗ ан тарӑх. Платон мӗнле ӗҫлетчӗ, астӑватӑн-и? Вӑл нихӑҫан та хӗрӳленместчӗ.

**Лиза.** Платон!. Вӑл ӗҫленӗ чух вӑхӑчӗ урӑх пулнӑ. Вӑл ӗҫленӗ чух ҫыннисем те, лаши те, машини те туллиех пулнӑ, а халь акӑ, пӗр жнейка ҫӗҫҫи шыраса, пилӗк колхоза ҫитрӗм... Ниҫта та ытлашши ҫук. Платон!.. Ну, тепӗр тесен, пӑрахатӑп та ларатӑп. Манран пурӗ-пӗр ӑнӑҫуллӑ ӗҫлесси пулас ҫук.

**Спиридон.** Ан калаҫ.

**Лиза.** Ыранах района каятӑп, кӑларччӑр.

**Спиридон.** Апла хӑтланма юрамасть.

**Лиза.** Юрамасть. Эсӗ ху ӗҫлесе пӑх-ха.

**Спиридон.** Эпӗ ватӑ ӗнтӗ.

**Лиза.** Эпӗ ҫамрӑк. Пурӗ-пӗр манран нимӗн те тухмасть. Ыран акӑ машина ахалех ларать. Мӗн, ман ӑҫтан тупса парас ҫӗҫҫине. Ҫук, ну! Хӗрарӑмсем тата „Ку Платон ҫумӗнче чӗрӗкне те тӑмасть", тесе калаҫҫӗ, тет.

**Спиридон.** Эсӗ ан итле.

**Лиза** (*тарӑхса*). Ӗҫлеместӗп эпӗ, пултараймастӑп.

**Спиридон.** Кин, кутӑнланса нимӗн те пулмасть.

**Лиза.** Мӗн, ман, ҫакӑнмалла-им (*тухса каять. Пауза.*)

**Сохрон.** Спиридон хӑта, тухса пӑхас мар-и, тем усал шухӑш ан тыттӑр вӑл.

**Спиридон.** Ан тух. Усала вӗрентме-и? Халех килет ак.

**Сохрон.** Макӑра пуҫлӗ тата.

**Спиридон.** Макӑртӑр, пӗчӗк ача мар.

**Сохрон.** Шел-ҫке-ха...

**Спиридон.** Эсӗ хушша-хуппа кӗрсе ан ҫӳре-ха, Сохрон хӑта. Эпӗ хамах майлатӑп. (*Пӑртуҫҫи кӗрет.*)

**Сохрон.** Тепри сӗтӗрӗнсе килчӗ тата. (*Хаҫат тытса ларать.*)

**Пӑртуҫҫи.** Ҫӗр хутах килем-ха.

**Спиридон.** Килех. Малалла ирт.

**Пӑртуҫҫи.** Кунта та юрать.

**Спиридон.** Кин патне-и?

**Пӑртуҫҫи.** Кин патне мар-ха. Старике шыраса килтӗм.

те... Сахрун, мĕнле ара ĕнтĕ эсĕ, çаплах киле пырас теместĕн-и? Мĕн пулчĕ сана? Сасартăках кам сивĕтрĕ сана килтен? Пĕччен, мукка пек пурăнса, йăлăхрăм ĕнтĕ. Атя (*Спиридона.*) Миçе хут курса калаçмарăм ĕнтĕ, кашнинчех çакăн пек, пĕр сăмах та чĕнмест. Мĕн пулнă ăна. (*Сохрона.*) Атя, Сахрун, ху лартнă килçуртăнтан та сивĕнтĕн-и ĕнтĕ.

**Сохрон.** Килçурт... Сутра калаçăпăр. Унта пĕтĕмпех паллă пулать, халĕ ман хыççăн ан танккаса çӳре.

**Пăртуççи.** Кала-ха эс мана, мĕншĕн пымастăн? Эсĕ каласан, эпĕ пĕлĕттĕм те ăша çунтарма та парахăттăм. Мĕскер, кĕвĕçетĕн-и эсĕ мана кам çумне те пулин... Кĕвĕçме—ватăлнă ĕнтĕ. Каласам, пĕлтер шухăшна.

**Сохрон** (*Спиридона*). Ну, эпĕ сӳсменсене илсе каям-ха (*каять*).

**Спиридон.** Мĕскер пулнă ăна?

**Пăртуççи.** Хам та шалт аптăранă ĕнтĕ. Хăйне юлташ пĕр ача та туса параймарăм та, çавăншăн пулĕ, тетĕп. Ĕлĕкрех тек сăмахлатчĕ те... Тем тĕлне пултăмăр ĕнтĕ, аптăраса макăрса та пăхатăп тепĕр чух...

**Спиридон.** Тĕлĕнмелле.

**Пăртуççи.** Ну, ан ятлăрах çĕрхута кансĕрлесе çӳренĕшĕн (*каять*).

**Спиридон.** Хăтланаççĕ çав. Ял тĕлĕнтермĕшĕсем.

**Лиза** (*кĕрет*). Атте, апат пĕçернĕ-и?

**Спиридон.** Вучах çинчех, терĕ.

**Лиза** (*апат антарса, çиме ларать*). Атте, ларса çи.

**Спиридон.** Эпир çирĕмĕр. (*Пауза.*) Бот, кин, эпĕ сана пĕр юмах ярса кăтартам-ха. Итлетни?

**Лиза.** Итлетĕп.

**Спиридон.** Ĕлĕк-авал çулсенче,
Ту халăх çĕршывĕнче,
Кăвак тинĕс леш енче,
Чуллă сăртсем хушшинче,
Пурăннă, тет, ĕлĕкех,
Пĕр карчăкпа пĕр старик.

Самай пурӑнсан, ҫаксен
Пӗр ача ҫуралнӑ, тет.
Ачин алли-урисем те
Чип-чиперех пулнӑ, тет.
Анчах унӑн ӑс-тӑнӗ
Патшанчен те ытларах
Пулнӑ, тет, мӗн ҫамрӑклах.
Усет ача, вӑйланать,
Кун тӑрӑх мар, сехетпе.
Те ача пурӑнманран,
Карчӑкпала старикӗ
Ят хучӗҫ, тет, ачана.
„Ӑмӑрткайӑк" терӗҫ, тет.
Ӑмӑрткайӑк ӳсрӗ те
Часах ҫунат сарчӗ, тет.
Пӗррехинче ирхине,
Ҫӳллӗ ту ҫинче вӗҫет!..
Пӑхать йӗри-тавралла,
Пин ҫухрӑмра, аякра,
Пӗр ҫын суха сухалать.
Тепӗр еннелле пӑхать.
Хӗҫ туптанине курать.
Чӗнсе илет ҫаксене
Хӑй патне, ту хушшине:
„Мӗншӗн лашу начар сан?"
Тесе ыйтать сухаҫран.
„Улпут валли ӗҫлесех
Чунӑм тухать,—хама ҫук"
„Эсӗ мӗншӗн пит типшӗм"
Тесе ыйтрӗ тепринчен.
„Хамӑн пуҫа касмалли
Хӗҫсем тусах пӗтрӗм эп,
Чуна илет пуль хуҫа",
Тесе каланӑ тепри.
Курать, чӑнлӑх ӑҫтине,
Сухаҫпала тимӗрҫе

Вĕрентрĕ, тет, кĕрешме,

**Лиза.** Кампала-ши?

**Спиридон.** Çĕленпе

Тата ун чĕпписемпе.
Тухрĕç, тет, вăрçă хирне
Ăмăрткайăкпа çĕлен:
Ăмăрткайăк çапать, тет,
Çĕлен хускалмасть те, тет.
Çĕлен хирĕç çапрĕ, тет те,
Юн айне путарчĕ, тет.

**Лиза.** — Вилнĕ-и вара?

**Спиридон.** Çук, вилмен!

Юн хуранĕнчен тухсан,
Суранĕсем тӳрленсен,
Кайăк тухнă тепĕр хут
Çĕленпеле çапăçма.
Мĕн пур вăйне пухать те
Пĕррех çапать çĕлене!..
Çĕлен пĕрре лекнипех
Тĕп йăвинчен сирпĕнет,
Унтан тепре лекнипе
Хыçран чĕпписем сикеç.
Çĕлене аркатнипе
Пĕтĕм халăх савăнать!
Нихçан пулман, çĕнĕлле
Пурнăç тума тытăнать.
Анчах çак кайăк çине
Вунтăвата çĕлен тухать.
Вунтăваттăн пулсан та
Амăрткайăк хăрамасть,
Сехетпеле ӳснĕскер
Темĕн чухлĕ вăй пухать,
Шăлпа çыртса кăшласа,
Вăл пурне те аркатать.
Хаяр кĕрешӳсенче
Нихçан та пуçне усман,

Темле йывăр пулсан та
Тăшмана кулма паман.

**Лиза.** Ку сан юмах-ха, атте,
Хамăр çавăн пек пулсан...

**Спиридон.** Кайран çав çын Мускавра
Пурăна пуçланă, тет.
Тĕнчери пур халăха
Вĕрентнĕ, тет, кĕрешме.
Унăн куçĕ Мускавран
Пин çухрăма курать, тет,
Ун çулăмлă сăмахĕ
Пин çухрăма илтĕнет.
Унăн çутти Мускавран
Пин çухрăма çутатать.
Унăн ăшши Мускавран
Хĕвел пекех ăшăтать.

**Лиза.** Тĕлĕнмелле юмах. Нимрен те хăраман иккен...

**Спиридон.** Санăн та нимрен те хăрама юрамасть. Санăн та, çав ăмăрткайăк пек пĕр хăрамасăр, йывăрлăхсене хирĕç тухас пулать. Сан умăнта вĕçĕ-хĕррисĕр ылттăн ыраш хумханать, вĕçĕ-хĕррисĕр акмалли пусă тăсăлать. Куçпа виçсе илме çук. Чăнах, ытти çулсемпе танаштарса пăхатăн та, çӳç-пуç вирелле тăрать. Хăрамалла. Эсĕ ан хăра. Куç хăрать те алă хăрамасть, тенĕ ĕлĕк ваттисем.

**Лиза.** Эпĕ сана ăнланаймастăп, атте.

**Спиридон.** Ăнланас пулать. Ĕçпе унпа, тăшманпа кĕрешнĕ пек, кĕрешес пулать, унсăрăн вăл парăнмасть (*Пауза*). Ыраша миçе кун хушшинче пухса кĕмелле-ха?

**Лиза.** Вунă кун.

**Спиридон.** Выракансем миçе çын?

**Лиза.** Виçĕ бригадăра тăхăрвун виçĕ çын.

**Спиридон.** Акаканĕсем?

**Лиза.** Акакансем пур. Анчах, сеялкăпа çеç аксан, ĕлкĕреймĕстпĕр. Çыннисем те, лашисем те пушă мар, вăрлăх çапмалла.

**Спиридон.** Вăрлăх валли кив тырă çук-и?

**Лиза.** Пур та... юрăхсăр.

**Спиридон.** Эх, вăл иртнĕ кĕрхи çанталăка...

**Лиза.** „Победа" колхозăн юрăхлă вăн.

**Спиридон.** Кивçен илес.

**Лиза.** Чăнах!

**Спиридон.** Вот сана ыраш вырма çынсем.

**Лиза.** Ак, хайхи, ĕç майлашать, атте. (*Телефон шăнкăртататать.*) Алло! а! Райисполком? Здравствуйте. Çывăрман-ха. У-у, халь, ирччен... а? Тепĕр çичĕ çын? Ăçтан тупам-ха? Пирĕн халь те сакăр çын каяççĕ. Татах çичĕ çын? (*Пауза.*) Юрать. (*Трубкăна çакать*). Ак сана тырă...

**Спиридон.** Да... (*Пауза*). А, кĕлте кӳрекенсем, вăрлăх çапас мар пулсан, вĕсем ахалех.

**Лиза.** Вăрлăх тырри тиеме ярас пулать.

**Спиридон.** Мĕн тумалла ха апла. Çук, капла ĕç тухмасть. Кĕçĕрех заседани пухмалла та, çынсене ĕçрен ĕçе куçарса майлаштармалла, унсăрăн ĕç тухмасть. Пахча хуралçисенчен тата ытти çĕртен çирĕпрех, ĕçе пултаракан çынсене куçармалла та вĕсен вырăнне асаттесемпе асанжесене хартмалла. Кам мĕнле ĕçе ĕçлеме пултарать, пурне те ĕç патне явăçтарас пулать.

**Лиза.** Çапла тумалла пуль.

**Спиридон.** Ĕçрен пăрăнакансене пăркăчлас пулать. Эсĕ тыткалаймастăн пулас-ха вĕсене.

**Ваççа** (*кĕрет, куççулĕпе*). Лиза, инке...

**Лиза.** Мĕн пулчĕ, Ваççа?

**Ваççа.** Итлемеççĕ вĕт.

**Лиза.** Кам? Мĕн итлемест?

**Ваççа.** Макар арăмне лава ямалла турăмăр-çке. Темĕн тусассăн та каймастăп, тет.

**Лиза.** Мĕншĕн каймасть?

**Ваççа.** Ачасене пăхакан çук, тет. Мĕн, ман киле хупса каяс-ши, тет.

**Лиза.** Яслĕ мĕншĕн?

**Ваççа.** Эпĕ ăçтан пĕлем...

**Лиза.** Хăй ăçта вăл?

**Ваççа.** Кунтах, килкартинчех тăрать.

**Лиза.** Чĕн-ха ăна.

**Ваççа** (*алăк уçса*). Кĕр.

**Матрӳне** (*çенĕхренех ятлаçса кĕрет*). Мана ямасăр çын тупман вĕсем. Лашапа çӳреме мансăр пуçне çын пĕтни? Манăн ачасене кампа шанса хăварма-ха. Пĕчĕк вĕт вĕсем.

**Лиза.** Эсĕ, инке, чипер калаç-ха.

**Матрӳне.** Чăнах, мăшкăланă пекех. Тепĕр тесен, ĕç кунĕ лайăх ӳкнĕ çĕре яни çук, ăçта пулчĕ унта турткалаç-çĕ. Çынсем пур, кам сĕт ферминче, кам сысна ферминче.

**Лиза.** Сана та чăх фермине вырнаçтарас терĕмĕр-çке, мĕншĕн килĕшмерĕн.

**Матрӳне.** Мансăрăнах туп-тулли унта.

**Ваççа.** Ну, эсĕ каятни каймастни те, ман урăххисем патне çитмелле тата.

**Матрӳне.** Каймастăп. Хăть пус-кас, каймастăп. Арçынсем пĕр килте çук, ултă уйăх çине кайрĕ ĕнтĕ, пĕр сасхура та çук.

**Спиридон.** Апла пĕри ан кайтăр, тепри ан кайтăр. Кам-ха государствăна тырă тăрататать? А? Ман ывăл та фронтра, сан упăшку та фронтра... Эпир государствăна вăхăтра тырă тăратмасан, мĕнпе тăрантарĕ-ха вăл сан упăшкуна.

**Матрӳне.** Вăл çаплах пулĕ те...

**Спиридон.** Выçă çын кампа çапăçма пултартăр. Мĕн, нимĕççем кунта килессе кĕтетĕн-им?

**Матрӳне.** Апла шухăшламастăп та... ачасене никампа та хăварма çук, терĕм те...

**Лиза.** Икĕ ачи яслине çӳреççĕ. Иккĕшĕ пысăк ĕнтĕ.

**Матрӳне.** Мĕн... апла... каймаллах пулать-им...

**Лиза.** Каяс пулать, Матрӳне аппа.

**Матрӳне.** Ваççа, лашин тавраш̆сем конюхĕсем патĕнчех пуль.

**Ваççа.** Çавăнтах.

**Матрӳне.** Кайса хатĕрлем-ха эппин... (*каять.*)

Ваççа. Кайса хатĕрле (*кайма тăрать*).

Лиза. Ваççа, ан кай-ха. Эсĕ халех леш урама вĕçтер те Лука мучие кала, правленине каçтăр.

Ваççа. Юрать (*каять*).

Спиридон (*ут тавращĕсене илсе*). Çаксене кайса леçес пулĕ (*каять*).

Лиза (*телефонпа*). Правлени-и ку? Таня, çывăрмастăн-и эсĕ? Дежурный пур-и? Пур. Акă, мĕн: халех правлени заседанине пухмалла. Çĕрхутах. Кала, правлени членĕсене пурне те чĕнсе пухтăр. Халех (*Трубкăна çакать*). Пĕтĕм ĕçе çĕнĕрен, вăйпа тытăнас пулать (*Хут илсе çырать.*) Пĕрремĕш бригадăн вунултă лаша.. Виçĕ лаши вăрлăх патне... Тăватă лаши жнейка патне...

Якур (*кĕрет, сулахай аллине çакнă*). Пирĕн килес.

Лиза (*тĕлĕнсе*). Якур, ăçтан эсĕ капла?

Якур. Госпитальрен.

Лиза. Атя, лар, каласа пар, мĕнле çитрĕн? Ăçтан?

Якур. Куйбышевран.

Лиза. Епле тасалса кайнă эсĕ.

Якур. Аван пăхаççĕ.

Лиза. Нумай выртрăн-и?

Якур. Тăватă уйăх ытларах.

Лиза. Сулахай аллу пулас?

Якур. Çапла.

Лиза. Ну, каласа пар, ăçта, мĕнле унта?

Якур. Килтен кайнăранпах Мускавра тăтăмăр. Унтан Харьков еннелле ăсатрĕç. Вырăна çитсен, мĕн кирлĕ ăна пачĕç те, тÿрех фронта. Сисме те пулмарĕ, пуçланса кайрĕ хайхи... Лешсем çĕмĕрсе килеççĕ... Пăхса выртатпăр. Пеме каламан. Лешсем çывхарсах, çывхарсах килеççĕ. Сасартăк приказ: „Огонь" тени янраса кайрĕ. Раз, хĕртсе илтĕмĕр те... Нимĕçсем çавапа çулнă пек йăванчĕç. „В атаку" тенĕ сасă янраса кайрĕ. Арăслансем пек вăркăнчĕç пирĕн боецсем... Ну, хута кайрĕ вара... Штыкĕ, приклачĕ, автомачĕ... граната вĕçет... Сасартăк ман алă пĕçерсе кайрĕ. Пăхатăп, хĕп-хĕрлĕ юн. Юна курсанах

манăн пĕтĕм куç-пуç хуралса килчĕ те... Кайран астумастăп.

**Лиза.** Платон мĕнле? Эсир унпа пĕрле пураннă вĕт-ха?

**Якур.** Пĕрле. Мана амантичченех эпĕ ăна çухатрăм. Санчастьре пĕр талăк выртрăм, каялла тухнине курмарăм. Вилчĕ пулĕ, терĕм вара.

**Лиза.** Вилчех пулĕ-ши?

**Якур.** Вилчĕ те пулĕ.

**Лиза** (*макăрать*).

**Якур.** Ку таранччен пĕр çыру та çырман-и?

**Лиза.** Çук. Пĕтрех пулĕ çав, шеремет (*макăрать*). Кайнă чухне калать. „Эсĕ мана ан пăрах, пирĕн патăртах пурăн", тет. Качча килсе арăм ятне илтни çеç пулчĕ, килсен пĕр талăк та пурăнаймарăмăр.

**Якур.** Нимĕн тума та çук. Çавăнпа вăрçă ĕнтĕ.

**Лиза.** Эсĕ тархасшăн аттесене ан пĕлтер, макăрсах вилĕç тата. Мĕнле сынччĕ, мĕнле сынччĕ...

**Якур.** Çапла, аван сынччĕ (*кайма тăрать. Хăйне хăй*) Те... халех пуçлас... (*Пауза.*) Лиза, енчен, эпĕ сана пĕр сăмах каласан, эсĕ çилленмĕн-ши?

**Лиза.** Мĕнле сăмах?

**Якур.** Платон таврăнассине кĕтмелли çук ĕнтĕ, эсĕ мана...

**Лиза.** Мĕн каласшăн эсĕ?

**Якур.** Эпĕ саншăн фронтран килме васкарăм, сана курас тесе. Кунĕн-çĕрĕн, фронтра чухне те сан çинчен çеç шухăшлаттăм. Мана амантсан, эпĕ хама çав тери телейлĕ тесе шухăшларăм, тивех Лиза патне вĕçме май килчĕ ĕнтĕ, терĕм. Госпитальрен тухсан, киле ярассине пĕлсен, урасем çĕре те перĕнмерĕç. Пароход çине лартăм та, тӳрех сан пата.

**Лиза.** Маттур, манран ытла никама та юратмастăн иккен эсĕ?

**Якур.** Никама та. Ĕлĕк эпĕ сана курсассăнах, ман çурăм тăрăх сивĕ чупатчĕ. Эпĕ çав тери пăлханаттăм, чĕлхе хытса ларатчĕ ман. Хам ăçта тăнине те манаттăм.

**Лиза.** Намăс мар-и сана çакăн пек вăхăтра çапла калаçма. Ăçта сан намăсу? Хĕрарăмран мăшкăлас йĕрке халь те пĕтмен иккен санăн. Тухса кай.

**Якур.** Тухса кай?

**Лиза.** Тухса кай.

**Якур.** Тĕлĕнмелле.

**Лиза.** Эсĕ каймастăн пулсан, эпĕ хам каятăп (*каять*).

**Якур.** Иртерех пуçларăм пулас, ухмах. Май килмĕ-ши вара? (*Шухăша кайса*) Платон пĕр çыру та çырман, тет. Апла пулсан, вилнĕ вăл. (*Суранланнă пўрнине хăй çумне çĕклесе çавăркаласа илет.*) Ман çинчен, эпĕ мĕнле майласа килнине никам та пĕлмест. Куна, ватă çерçие, хăвăхпа улталама май килмесен, сар тулă та сапса парăпăр. Кирек мĕнле пулсан та, колхоз председателĕ манăн пулмалла. Эпĕ вĕсене-и? Аттене ссылкăна янишĕн, пĕтĕм килçурта тытса илнишĕн, арманшăн тата хама тĕрмене хуптарнишĕн, пуриншĕн те, пуриншĕн те таварăп!

ЧАРШАВ.

## 3-мĕш пайĕ

Колхоз правленийĕ. Таса пўлĕм. Пысăк кантăксем. Стена çинче çулаùççем сăнĕсем, ялхуçалăх выставкинче панă грамота тата тĕрлĕрен сводкăсем çакăнса тăраççĕ. Сылтăмра тултан кĕмелли алăк, сулахайра председатель пўлĕмне кĕрекен алăк. Якур çырса ларать.

**Якур.** Утмăл икĕ лав... Процентпа шутласан.

**Лиза** (*хăй пўлĕмĕнчен тухса*). Якур, çак сводкăсене хатĕрле-ха, ыран района ярас пулать. (*Хут парать. Аякра аслати сасси илтĕнет.*) Ĕçĕ халь те ăнса пымасть, тата çумăр кансĕрлесшĕн-и (*Телефон шăнкăртаттарать. Итлесе*) „Колхоз социализм“. Короткова. Тырă леçни çинчен-и? Халĕ çеç счетовода хатĕрлеме хушрăм. А? Ўксех юлмастпăр. Пирĕн кунта пĕр Матрўне аппа пур. Çав тери харсăрскер. А? Аха. Çавă çĕмĕрттерет. Ун хўттипе ача-пăчасем те çўреççĕ. Кашни кунах. Герой, герой. Енер ăна бригадира лартрăмăр-ха. А? Сводкăсем ыран

пулаççĕ. Ыраш-и? Май таранах кĕрсе лартăмăр. А? Жнейка ахалех. Жнейкăпа вырнă пулсан-и, ыран пĕтереттĕмĕр. „Маяк“ колхозран юлатăр? Вĕсем хăçан пĕтереççĕ? Ыран? Ан тĕлĕнтерĕр. Ĕнер çеç калатчĕç-ха, тепĕр виçĕ куна çитет, тетчĕç. Намăс куртăмăр. Тепре куриччен (*трубкăна çакать*). Ох, касрĕ ку жнейка ахаль ларни... Пур ĕçрен хăтаратăп та çынсене, ыран вырса пĕтеретпĕрех. Çавăнта намăс курас-и!.. У-у!.. (*Аслати сасси.*) Якур, çумăр питĕ вăйлă килет пулас, арман вешникне уçса пăрахас пулать, эсĕ яр-ха кама та пулин.

**Якур.** Юрать.

**Лиза.** Эпĕ каçалăхсем хĕрне вĕçтерем. (*Каять.*)

(Аслати сасси.)

**Якраççи** (*кĕрет*). Ах тур, çумăр çăва пуçларĕ.

**Якур.** Мĕншĕн халех вĕçтерсе килтĕн?

**Якраççи.** Пăрахса килчĕç, ушкăнпех. Эпĕ пахча витĕр тўрех килтĕм те...

**Якур.** Эсĕ пур ĕçре те çавăн пек, теççĕ-ха. Нихçан та ĕç пĕтиччен тăмастăн, теççĕ. Çакăн пек хĕрў вăхăтра ик çыншăн, виç çыншăн ĕçлес пулать. Илтмен-и, нимĕç епле çĕмĕрсе килет, тет, авă. Кунта эпир япăх ĕçлесен, лере фронтра, мĕнле пулĕ вара?

**Якраççи.** Татах хула тытса илнĕ, тет-им?

**Якур.** Эсĕ çăварна карса ан çўре. Нимĕçсем Атăл çине татса тухнă ĕнтĕ.

**Якраççи.** Леш, Сталинград патĕнче теççĕ-и çав?

**Якур.** Сталинграда нимĕçсем илнĕ, тет. Кĕç-вĕç Куйбышева, унтан, Атăл тăрăх килсе, Хусана ярса илĕç ак.

**Якраççи.** Тур çырлахах!

**Якур.** Тур çырлахах мар. Нимĕçсене тытса чарас тесен, пирĕн кунта çывăрмасăр ĕçлес пулать, ăнланатăн-и эсĕ çавна? Ахаль, ĕççĕр танккаса çўреме юрататăр... Çавăн пек, куçа курăнса килекен хăрушлăх çинчен халăха каласа ăнлантарасчĕ. Халăх та сасартăках лайăх ĕçлеме тытăннă пулĕччĕ.

**Якраççи**. Кайччĕ, тĕлĕнтерсех ятăн эсĕ мана... Ара Хусан патне çитме инçе пулĕ.

**Якур**. Шыв тăрăх-и? Вĕсен парохочĕсем пирĕнни пек терĕн-им... Çавна ăнланас пулать.

**Васса** (*кĕрет*). Ху-у, йĕп-йĕпех пултăмăр.

**Мархва** (*кĕрет*). Ĕмĕрне кун пек çуман пуль.

**Пăртуççи** (*кĕрет*). Кай, ахаль, ниçта пĕр тип çырăн юлмарĕ.

**Якур**. Ну, ĕçсем мĕнле, Васса?

**Васса**. Чиперех.

**Якур**. Мĕншĕн пучах вумай тăкатăн эсĕ?

**Васса**. Мĕнле нумай, пучахне пуçтарсах пыраççĕ вĕт.

**Якур**. Пуçтараççĕ çав. Кашни кун сан бригадăра ытларах пуçтараççĕ. Мĕншĕн çынсене хытараймастăн эс?

**Васса**. Эсĕ ху та ĕçлесе курман-ха халь, теççĕ те... итлемеççĕ. Ну-ка, кинемейсем, çумăра пула, паян мĕн чухлĕ ĕçленине эпĕ çырман (*Мархвана.*) Кинеми, миçе тĕм пулчĕ-ха санăн паян?

**Мархва**. Хĕрĕх пилĕк тĕм пулас.

**Васса**. Суймастăн-и?

**Мархва**. Ак тата, мĕн калаçатăн, ачам.

**Васса** (*çырать*). Пăртуççи аппа, санăн тата?

**Пăртуççи**. Манăн ирхи апатчен вунвиçĕ тĕм пулчĕ те... Вунпиллĕк тĕм кăнтăрччен турăм эпĕ... Каçхи кӳлĕм çирĕм пилĕк тĕм пулас.

**Васса**. Пĕтĕмпе?

**Пăртуççи**. Пĕтĕмпеле утмăл виçĕ тĕм пулчĕ пулĕ.

**Васса**. Утмăл виççĕ?

**Пăртуççи**. Ĕ, ал-виççĕ. Çавна та мантăм-ĕç.

**Васса**. Якраç аппа, санăн тата?

**Якраççи**. Ман... Манăн-и? Утмăл тăватă тĕм пулас.

**Васса**. Утмăл тăваттă?

**Якраççи**. Çаплах ĕнтĕ. Миçе-ха?

**Васса**. Юрать эппин. Çырăпăр.

**Якраççи**. Пĕрре те сана суяс кăмăл çук манăн.

**Мархва**. Манăн паян миçе сот пулчĕ-ши?

**Васса.** Тĕм шучĕпе паллă вĕт. Сан ҫинчен калаҫу ҫук-ха. Ҫаксене юри тĕрĕслес терĕм-ха. Пăртуҫҫи ак ала виҫĕ тĕм турăм, тет. Тĕмĕ шучĕ ҫаплах, вăл суймасть. Анчах мĕн чулĕ тĕш пучах сирпĕтет. Каланине пĕр сăмах та йышăнмасть.

**Якур.** Ай-ай, Пăртуҫҫи аппа, эсĕ пĕчĕк ача-им? а? Апла туни аван мар.

**Васса.** Утмăл тăвата тĕм тăвакан, Якраҫҫи, кил-ха кунта.

**Якраҫҫи.** Ну, мĕн-ха, мĕн ҫитмест?

**Ваҫҫа.** Эсĕ мĕншĕн кĕлтесене вĕтĕ тăватăн?

**Якраҫҫи.** Вĕтĕ тетĕн! Ҫырлахах, кам курман пулĕ эпĕ кĕлте ҫыхнине. Ку таранччен ҫитĕннĕ, тырă вырсах, никам мана шарламан. Ак тата?! Вĕтĕ тăватăн! Эпĕ халиччен тыр вырса курман-и? Ĕлĕк тем чулĕ кĕрĕшсе вырнă та... Колхозăнне анчах мар, таҫта та вырнă пулĕ, тен вĕтĕ те шултра та тунă пулĕ, халиччен шарлакан пулман. Халĕ ĕнтĕ, тур ҫырлахах, манер ҫук... Сантиметрпа кĕлте виҫеҫҫĕ. Тыр вырса та, ним туса та юрас ҫук. Хăш ĕмĕрте кĕлтене виҫни пур.

**Ваҫҫа.** Эсĕ кĕлтесене шултăрарах туса пыр. Ҫынсеннипе пĕр пек.

**Якур.** Илтрĕн-и Якраҫҫи? Ваҫҫа тĕрĕс калать ĕнтĕ, ўлĕмрен асту ҫавна.

**Якраҫҫи.** Эпĕ хамăнне хам пĕлетĕп, вĕтĕ мар.

**Якур.** Эпĕ хам курнă, шултра мар.

**Якраҫҫи.** Атя, эппин, вырнă ҫĕре кайса пăхар. Мĕн пур уйри ҫĕмеле аркатар.

**Якур.** Кайса пăхма та, нимĕн аркатма та кирлĕ мар. Ҫавăн пек ĕҫленĕшĕн пилĕк ĕҫ кунĕ штраф хуратăп эпĕ сана. Ĕнер каҫ кўлĕм, авă, хĕрў ĕҫ вăхăтĕнчех, ĕҫе тухмасăр мунча хутса кĕнĕ. Уншӑн та тепĕр пиллĕк ĕҫкунĕ хаплаттармалла.

**Якраҫҫи.** Хур-хур, ара. Мĕншĕн-ха пиллĕк ҫеҫ? Вунă ĕҫ кунĕ хумалла, ма хăратăн? Пĕрре пилĕк ывăниччен тырă вырса курман пулĕ, вăлах мана штрафпала хăратать.

**Якур**. Каçхине заседанине килетĕн, унта калаçăпăр, халĕ çитет.

**Якраççи**. Заседанине те килетĕп, хăрамастăп, сирĕн ая пулас çук-ха кăçал. Мана эсĕ штрафпала хăратас терĕн-и? Акă çакна „не видал" (*Каять. Пурте кулаççĕ.*)

**Пăртуççи**. Чĕлхи канчĕ пуль аранах... (*Каять.*)

**Мархва**. Ах, çатăлти?.. Култарса вĕлерет пулĕ (*Каять.*)

(Лиза, Матрӳне, Горшков кĕреççĕ.)

**Лиза**. Ну, çĕнĕ бригадир, ĕçсем мĕнле?

**Матрӳне**. Япăхах мар.

**Лиза**. Вырмалли миçе гектар юлчĕ?

**Матрӳне**. Виççĕ.

**Лиза**. Ыран пĕтет-и?

**Матрӳне**. Пĕтмелле.

**Лиза**. Ваççа, сан?

**Ваççа**. Иккĕ çурă.

**Лиза**. Ыран пĕтет-и?

**Ваççа**. Ыран, кахал апатĕнче, пĕтет. .

**Лиза**. Горшков, санăн?

**Горшков**. Виççĕ ытларах.

**Лиза**. Хăçан пĕтет?

**Горшков**. Ыран мар, тепĕр кунне пĕтет.

**Лиза**. Ну, çук. Ыран ялта пĕр çын юлмиччен илсе тухатпăр та, мĕнле те пулин вырса пĕтеретпĕр. Ваççапа Матрӳне, хăвăрăнне вырса пĕтерсен, тӳрех Горшков бригадине пулăшма каятăр. Никам кĕтмен çĕртен тунă пек пултăр. Çапла-и?

**Бригадирсем**. Çапла. Юрĕ.

**Лиза**. Ака мĕнле пырать?

**Горшков**. Йĕркеллех. Планпа çирĕплетнине аксах пыраççĕ.

**Лиза**. Ваççа, санăн мĕнле?

**Ваççа**. Аван, манăн Лукка мучи хăй майлаштарать, вăл ватă çын, вăл пĕлет.

**Лиза.** Матрӳнӗнне пӗлетӗп-ха, ну, кайса апатланӑрах). Яра парӑр. Ваҫҫа, эсӗ юл-ха. (*Матрӳнепе Горшков каяҫҫӗ*. Лар. (*Ваҫҫа ларать*).

**Ваҫҫа.** Мӗн тумалла?

**Лиза.** Лар. (*Якура.*) Якур, эсӗ илтнӗ-и, пирӗннисем Сталинграда хӑварнӑ, теҫҫӗ?

**Якур.** Кай, суяҫҫӗ пулӗ! Илтмен, илтмен. Кам каларӗ?

**Лиза.** Иккӗмӗш бригадӑра калаҫаҫҫӗ. Районтан шарламарӗҫ.

**Якур.** Ах, чӗлхисене касса илесчӗ. Кам-ши ҫав чӗлхене хыҫса ҫӳрет.

**Лиза.** Ну, мӗнле, счетоводра ӗҫлеме кӑмӑла каять-и?

**Якур.** Мӗншӗн ыйтатӑн эсӗ ӑна?

**Лиза.** Эсӗ ӗҫлесшӗн марри курӑнать, ҫавӑнпа.

**Якур.** Ӗҫлесшӗн марри? Ӑнланаймастӑп.

**Лиза.** Эпӗ сана ӑнланаймастӑп. Пӗрремӗш бригадӑра ҫӗмелсене сӳтсе тутарма сана хушса хӑварнӑччӗ, тутартӑн-и эсӗ ҫавна?

**Якур.** Тутарман.

**Лиза.** Мӗншӗн тутарман? а? Е вырнӑ тырри ана ҫинчех ҫӗрсе кайтӑр-и? Пӗлетӗн-и эсӗ, мӗн чухлӗ тырӑ пӗтме пултарать? Ваҫҫа, сана вӑл ун ҫинчен каларӗ-и?

**Ваҫҫа.** Каламан.

**Лиза.** Сакӑр гектар! Мӗншӗн хушнине эсӗ итлеместӗн? Кам явап тытать ӗнтӗ ҫакӑншӑн? а?

**Якур.** Эпӗ айӑплӑ...

**Лиза.** Суратӑп эпӗ хӑй юри тунӑ айӑпа йышӑнакан ҫын ҫине.

**Якур.** Ҫанталӑк уяр, терӗм те... (*Аслати сасси.*)

**Лиза.** Тухса пӑх, „уяр".

**Горшков** (*чупса кӗрет*). Лизавета Ивановна!

**Лиза.** Мӗн пулнӑ?

**Горшков.** Арман...

**Лиза.** Мӗн, арман?

**Горшков.** Урлӑ каять. (*Аслати сасси.*)

**Лиза.** Вешникне уҫман-и?

**Горшков.** Пӗлместӗп. Талкӑшпех каять.

**Лиза** (*Якура*). Эсӗ никама та ямарӑн-им?

**Якур.** Ятӑм-ҫке.

**Лиза.** У-ух, шуйттан пуҫӗ. Яман эсӗ, никама та!..

**Горшков.** Атьӑр, хӑвӑртрах. (*Каять.*)

**Лиза** (*плащне тӑхӑнса*). Якур, атя, чуп, мӗн туса ларатӑн?

(Каять. Ваҫҫа та тухса чупать.)

**Якур.** Май килнӗ чух кайса пулӑшас. (*Каять.*)

**Сохрон** (*кӗрет.*) Лизавета Ивановна, Лизавета Ивановна. Ӑҫта кайса пӗтнӗ вара? (*Аслати сасси.*) Ай-ай!.. Кун пек ҫилхусӑркалла ҫумӑр ӗмӗрне те ҫуман пуль.

**Спиридон** (*Лиза валли апат ҫӗкленӗ, кӗрет*). Ай-яй вӑйлӑ ҫӑвать... Куҫа тӗртсе шӑтарсан та курӑнмасть. Кин, ҫук-им тата?

**Сохрон.** Хам та ҫавна кӗтетӗп те... Улӑха ҫитерме кайма ҫук, ҫумӑр ҫӑвать, лашисене мӗн памалла-ши тесе ыйтса пӑхас, терӗм те... Спиридон, хӑта, эсӗ куртӑн-и, уйри фермӑсен ҫиййӗсене пӗтӗмпех сӳсе пӑрахнӑ вӗт.

**Спиридон.** Чӑх чӗпписене пӗтерчӗ пуль эппин, пӗтӗмпех.

**Сохрон.** Ай-яй, ҫынна пӑтӑрмах тӑваканниех нумай-ҫке.

**Спиридон.** Кине апат леҫсе парас терӗм те, хӑй ҫук имӗш. Каяс. Килсен ҫийӗ. (*Апатне лартать.*)

**Сохрон.** Спиридон хӑта, эсӗ васкатӑн пулӗ та-ха, лар-ха. Манӑн пӗр сӑмах пур.

**Спиридон.** Мӗнле сӑмах?

**Сохрон.** Сӑмахӗ манӑн... Ҫуртпа аптӑранӑ-ха эпӗ. Мӗн тумалла ӗнтӗ, ненай. Никама та каламанччӗ та-ха, сана каласа парам. Ултӑ ҫул каярах, вӑрланӑ тырра манӑн арӑм йышӑнса юлнӑ та... Тырри колхоз тырри пулнӑ. Эпӗ, ухмах, ҫав тырӑпа ҫурт ларт хур. Эсӗ мана пӗлетӗн, эпӗ халиччен ҫынӑнне пӗр шӑрпӑк тивмен. Ҫулталәк асапланса ҫӳретӗп ӗнтӗ. Арӑма сута парас тесе, прокурор патне те ҫитсе пӑхрӑм. „Ҫук", тет. „Пилӗк ултӑ

çул иртнĕ ĕçе хускатмастпăр", тет. Тем тумалла?! Арăмăн ятне те ярас килмест, çылăхлă çуртра та пурăнас килмест.

**Спиридон.** Тырри, миçе пăт пулнă вара?

**Сохрон.** Çирĕм виçĕ пăт.

**Спиридон.** Иртнĕ çул тырă аван пулчĕ, çавна тӳлемелĕх те тырă çук-и сан?

**Сохрон.** Тырри пур-ха вăл.

**Спиридон.** Тыт та тӳле. Кăмăл таса пулать.

**Сохрон.** Мĕнле питпе кайса тӳлес, намăс вĕт?!

**Спридон.** Тӳллемесен — ĕмĕр чĕрӳне çунтармалла пулĕ.

**Сохрон.** Тĕрĕс. Ну, урă пуçпах кайса тӳлеме хăюллăх çитес çук та... Пĕрре арăма намăслантарсах тӳлес пулать пуль.

**Спиридон.** Эсĕ çавăнпа-и, киле çӳреместĕн, теççĕ?

**Сохрон.** Апат çиме çӳрекелетĕп эпĕ тепĕр чух, çывăрасса ĕнтĕ, конюх майĕпе, лерех çывăрнă... (*каять.*)

**Горшков** (*чупса кĕрет*). Кам пур кунта? Спиридон Тихăнччă... Лизавета Ивановна...

**Спиридон.** Мĕн?

**Горшков.** Арман пăрăсĕ çинчен... тӳрех, аяла...

**Спиридон.** Пĕтрĕмĕрех (*Тухса чупаççĕ, юнашар пӳлĕмре шав.*)

**Горшков сасси.** Хунарне çутăр-ха, хăвăртрах лаша кӳлтерес пулать (*кĕрет*). Мĕн тума пĕлес (*телефонпа калаçать*). Почта... почта, почта... Аслатирен хăранă пуль... почта, почта... а? Почта-и? Почта... Больницăна парăр-ха. Больница-и? „Социализм" колхоз калаçать. Хăвăртрах пирĕн колхоза врач ярăр. Колхоз председателĕ арман пăрăсĕ çинчен ӳкнĕ, а? Больница? Больница? Татрĕç... Ах, шуйттансем... çиçĕмрен хăраççĕ пулас (*каять. Колхозниксем Лизăна йăтса кĕреççĕ.*)

**Спиридон** (*кĕрет*). Юнашар пӳлĕме вырнаçтарас. Вăхăтлăха... (*Юнашар пӳлĕме йăтса каяççĕ.*) Эсир кунта

аствăр-ха, эпĕ учительница патне чупам. (*Каять. Мархвапа Пăртуççи кĕреççĕ.*)

**Пăртуççи.** Ах, турă... Мĕн курса ларăпăрах.

**Мархва.** Вĕлерсен те сылтăм аллине тыттармасть. Хытă амантнă пулмалла.

**Пăртуççи.** Ырă çынăн яланах ĕмĕрĕ кĕске. Вилсех кайсан мĕн курăпăр вара.

**Лиза сасси.** Анне...

**Пăртуççи.** Сана чĕнет пулас.

**Мархва.** Мĕн ара, кин... (*Каять.*)

**Пăртуççи.** Мана, усала, ни халер лекмест, ни чир тивмест.

**Мархва** (*кĕрет*). Спиридона кайса чĕн-ха, учительница патне кайнăччĕ.

**Пăртуççи.** Вăл шкулта пуль?

**Мархва.** Çавăнта. Ах анчах, каçару ыйтмасăрах юлатăп-ши? Килнĕренпе çын евĕрлĕ пурăнаймарăмăр. Çын курайман пиркиех.... Пурăнннă чух нумай кирлĕ-çке пире... „Ман япалана ан тытнă пултăр, вилсен те килçуртăма сана халалас çук" тесе вăрçаттăм... Халь, акă, халалас тесен те никам та пулмĕ. Платонĕ пĕр çырмасть, эсĕ капла пулса тухрăн.

(Спиридонпа Солнцева кĕреççĕ.)

**Солнцева.** Районтан врач чĕнтĕр-и?

**Спиридон.** Телефон ĕçлемест.

**Солнцева** (*Мархвана*). Ну, мĕнле?

**Мархва.** Начар.

**Спиридон.** Ну, мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ.

**Солнцева.** Больницăна леçес пулать.

**Спиридон.** Пачах тĕттĕм-çке, мĕнле каяс? Пакăлчак таран пылчăк.

**Солнцева.** Мĕнле пулсан та леçес пулать.

**Спиридон.** Кама ярас-ха.

**Солнцева.** Матрўнене ярас терĕм эпĕ. Лаша кўлме каларăм (*Лиза патне каять.*)

**Спиридон.** Мĕн курса ларăпăр-ха. (*Мархвана.*) Эсĕ те килнĕренпе пурнăç памарăн, тем çитмест сана...

**Мархва.** Ан калаç-ха. Хам та темĕн чухлех ӳкĕнетĕп те...

**Спиридон.** Ăçтан çавăрăнса килчĕ ку инкек?

**Мархва.** Хăйĕн те çав самантрах каймалла пулман та...

**Спиридон.** Юхса кайтăр, тепĕр тесен, пăрăсу-пуçу. Пĕр пăрăсшăнах аптăраса лармăттăмăр. Çăва патне. Çакăн пек вăхăтра тем туса курăттăм хама-хам.

**Лиза** (*сасси*). Анне...

**Мархва.** Мĕн ара, кин?

**Колхозница** (*Лиза патĕнчен тухса*). Эпĕ конюхсене кайса васкатам-ха (*каять.*)

**Спиридон.** Ентĕ... Мĕн тума пĕлес... (*Пауза*).

**Солнцева** (*Лиза патĕнчен тухса*). Епле хĕрӳллĕ хĕрарăмччĕ. Мускава кайса килсен, калать: „Эх, Рита, хăçан пысăк çынсем пек ĕçлеме вĕренес-ши", тет. Хĕр чухнех унăн пĕтĕм шухăшĕ ĕçреччĕ. Пĕр-пĕр кĕнеке вуласанах, ман пата чупса пыратчĕ. „Куна мĕнле ăнланмалла та, куна мĕнле ăнланмалла", тетчĕ.

**Спиридон.** Çаплахчĕ те... (*Ваççапа Якраççи кĕреççĕ.*)

**Ваçça.** Рита Родионовна, эсир кунта-çке.

**Солнцева.** Мĕн пулнă, Ваçça?

**Ваçça.** Акă, çакă, çутăлнă çутăлманах пасара тухса тарасшăн, — мана итлемест.

**Якраççи.** Паян тырă вырасси пур-пĕрех пулас çук, терĕм те. Кайса килес, терĕм.

**Солнцева.** Тырă вырассисĕр пуçне урăх ĕç çук, терĕр-и? Курмастăр-и? Каçхине çилхусăрка мĕн туса хăварчĕ. Çавсене камсемпе юсамалла тетĕр эсир? Уйри фермăсен çийĕсене пĕтĕмпех сӳсе пăрахнă... Пасар!

**Якраççи.** Колхоз ĕçĕшĕнех вилсе выртас пулать ĕнтĕ.

**Спиридон.** Ех-ха-хай!.. Мĕнле чĕлхӳ çавăрăнать санăн? Колхоз! Колхоз пулман пулсан, пĕлетĕн-и эсĕ, мĕн пулса тăратчĕ паянхи кун? а? Çавна шухăшлама пĕлетĕн-и эсĕ?

**Якраççи.** Эсех нумай пӗлетӗн ӗнтӗ, таçта кайса вӗренмӗ пулӗ.

**Спиридон.** Аттен аслă шкулӗнче. Пурăнăç вӗрентнӗ мана, „ачам“. Юрать эсӗ çамрăк чухне пылпа кулаç çинче ӳсрӗн те... Астăватăп, хальхи пекех. Сирӗн умăртан иртнӗ чухне пӗремӗк татăкӗ ывăтса мăшкăлатăрччӗ. Эпӗ вăрçа тухса кайрăм... Сак тулли ача-пăча... Арăм сухапуçӗ тытса курман, лаши ӳксе вилчӗ... Тухса кайрăм. Тăвата çул çапкаланса çӳрерӗм. Камшăн? Никам та пӗлмест. Килте арăм, лаша çук пирки, пур-çук çӗре те шуратса хăварайман, ачисем выçăпа вилсе пӗтнӗ. Çав пурнăçа курнă пулсан, эсӗ те çапла калаçман пулăттăн. Халӗ, колхозра, вăрлăхӗ пур, машинӗ пур, лаши пур, ачи-пăчи валли ясли пур, ӗçлеме ан ӳркен çеç. Колхоз пулман пулсан, çак вăрçă вăхăтӗнче мӗнпе акса хăвараттăн, кампа пуçтараттăн? Совет влаçӗ пулман пулсан, колхоз та пулмастчӗ, пысăк заводсем те пулмастчӗç. Пирӗн Российăн вара тырри те пулмастчӗ, танксем те пулмастчӗç, самолётсем те пулас çукчӗ. Ак, хайхи, Совет влаçӗ пулман пулсан, Гитлер пирӗн пуç урлă тахçанах каçса кайнă пулӗччӗ. Çавна шухăшлама пӗлетӗр-и эсир кăштах та пулин?.. Пасар!..

**Солнцева.** Апат çисенех, тырă типиччен, фермăсене витме тухатпăр. Кай. (*Якраççипе Ваççа каяççӗ.*)

**Якур** (*кӗрет*). Ну, мӗнле, шанчăк пур-и?

**Спиридон.** Аптрасах кайрӗ-ха.

**Якур.** Мӗн пăхса тăмалли пур, больницăна леçес пулать.

**Спиридон.** Халех лаша кӳлсе килеççӗ.

**Якур.** Халь ӗнтӗ, председатель кам пулӗ-ха малашне?

**Матрӳне** (*кӗрет*). Лаша кӳлсе килтӗм те... Улăхри кӗпере шыв илсе кайнă, тет.

**Солнцева.** Хăш улăхри кӗпере?

**Матрӳне.** Ара, кунти улăхрине.

**Солнцева.** Ну, мӗн тумалла-ха?

**Якур.** „Мӗн тумалла“, каяс пулать.

**Спиридон.** Ăçтан?

**Якур.** Çавăнтанах.

**Солнцева.** Шыв урлă мĕнле?

**Якур.** Кимĕпе илсе каçаратăп.

**Солнцева.** Мĕнле илсе каçарăн, хытă юхать-çке унта.

**Якур.** „Хытă". Арминче ун пек мар шывсем урлă каçнă.

**Солнцева.** Унта пĕччен.

**Якур.** Пулемётпа.

**Солнцева.** Ку çын вĕт.

**Якур.** Пултăрах.

**Солнцева.** Çитменнине, вилес пек.

**Якур.** Нимех те мар.

**Солнцева.** Шыва яран. Вĕлеретĕн.

**Якур.** Ну, эппин, кунта вĕлерĕр. Кунта, акă, пăхса тăнă çĕртех вĕлеретĕр. Мĕнле-ха эсир хытă чунлă çынсем. Елизавета Ивановна нимĕн тĕшне те тăмасть-и вара? Ăнланаймастăп. Этеме вырăнне те хумастăр эсир.

**Спиридон.** Мĕнле каçарăн-ха эсĕ унта, хăрах аллупа. Унта шыв çав тери хытă юхать.

**Солнцева.** Чимĕр-ха... Анат-касри кĕпере пăхма çын ярас.

**Якур.** Ой, унта, тăвата çухрăма...

**Солнцева.** Юланутпа.

**Спиридон.** Кама ярас?

**Солнцева.** Горшкова. (*Матрўнене.*) Матрўне, кай та Ваççана кала, халех юланутпа вĕçтертĕр.

**Матрўне.** Юрать.

**Спиридон.** Ача-пăчача шанмалла-и çакăн пек тĕттĕмре. Хамах каям-ха. Мархва, эсĕ киле кайса минтер илсе кил-ха, кине выртса кайма çемçерех пултăр.

(Мархвапа Спиридон каяççĕ).

**Якур.** Çук, эсир пĕрре те вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеместĕр. Халех кайса атă тăхăнатăп та шыв урлах илсе каятăп (*каять*).

**Солнцева.** Якур! Ан хăтлан кирлĕ мара... (*Каять.*)

**Лиза** (*ерипен кĕрет*). Платона курмасăрах вилетĕп-ши? Ах, сывлăш тухмасть. Кăкăр çине тем хăпартса хунă пекех. Пăрăс çинчен кам тĕртсе ячĕ-ши мана... Ăçта кайса пĕтрĕç ши?.. Района телефонпа пĕлтерес пулĕ... врач ярайĕç-ши... (*Телефон патне кайма тăрать те пуç çавăрăннипе урайне тирĕнсе каять.*) Ах!..

**Якур** (*васкаса кĕрет*). Сирĕн сăмахăра итлесе... (*Лиза патне пĕшкĕнет те итлесе пăхать, унтан пăвма тытăнать*). Качча илсе, мĕнтерпе пăчăхтарса вĕлерессшĕнччĕ... (*Пăвать.*)

**Лиза.** О-о-ой!.. (*Солнцева сасси. Якур пăвма пăрахать, çĕклет.*)

**Солнцева** (*чупса кĕрет*). Якур! Вĕлерме илсе каятнимĕн?

**Спиридон** (*кĕрет*). Районтан врачсем килсе çитрĕç!

**Якур** (*хĕпĕртенĕ пек*). Çитрĕç-и? (*Лизăна лартать.*)

**Спиридонпа Солнцева** (*врачсене хирĕç чупса.*) Иван Петрович!

**Якур.** Ĕлкĕреймерĕм!..

ЧАРШАВ.

## 4-мĕш пайĕ.

Декораци çавах. Горшков, Ваççа, Матрўне, Сохрон тата Якур лараççĕ. Пурте хĕллехи тумпа.

**Сохрон.** Унтан вара?

**Якур.** Нимĕççем пĕр яла çирĕпленсе ларнă пулнă. Кунĕпе çав ял çине петĕмĕр, ниепле те хăпатса кăлармалла мар.

**Ваççа.** Вот, шуйттансем!..

**Якур.** Тĕттĕм пуличчен пĕр вырăнтах тăрас тенĕ приказ килсе çитрĕ.

**Ваççа.** Вара?

**Сохрон.** Ан кансĕрле-ха...

**Якур.** Выртатпăр... Икĕ енчен те пеме чарăнчĕç. Кăшт тĕттĕмленчĕ. Пирĕн часть виçĕ пая уйăрăлчĕ, пĕр пайĕ, нимĕçсене йĕкĕлтесе, текех сайра-хутра перкелесе тăмалла пулнă... Тепĕр икĕ пайĕ, яла икĕ енчен хупăрласа илмелле пулнă. Çавăн пек приказ. Эпĕ сылтăм енне лекрĕм. Ялпа танлашрăмăр çех — пуçларăмăр вĕсене, пуçларăмăр хĕсме!.. Вут-хĕм!.. Унччен те пулмарĕ, пирĕн авиаци персе çитрĕ. Ну, тăкрăмăр вара... Лётчиксем çўлтен, эпир виçĕ енчен... Пĕр икĕ сехет хушшинче ялта пĕр нимĕç шăрши те юлмарĕ. Шурлăх урлă каçма ĕлкĕрнисем çеç, виç пайĕнчен пĕр пайĕ, чĕррĕн тăрса юлнă, ыттисем веçех, ана çинчи вырса пăрахнă кĕлтесем пек йăваланса выртаççĕ.

**Сохрон.** Сана хăçан амантрĕç вара?

**Якур.** Мана-и? Мана çав яла пырса кĕнĕ чухне, темле ухмах пуля пырса лекрĕ. (*Телефон шăнкăртатать. Якур итлет.*) А? „Социализм". Мăр. Унта тата икĕ звонок парас пулать. (*Лиза пўлĕмне каять.*)

**Ваççа.** Ку, Лизавета Ивановна, çаплах çитеймерĕ-çке.

**Матрўне.** Килме тухнă-и вăл?

**Ваççа.** Вăл районтан тухни çур сехет ытла ĕнтĕ. Эпĕ çитиччен бригадирсене пух-ха, терĕ те, хăй çук.

**Сохрон.** Килет пулĕ ха.

**Лиза** (*кĕрет*). Салам!

**Пурте.** Салам! Ака сăмах çинех çитрĕ. Çылăхсăр çын...

**Лиза.** Нумай кĕттертĕм пулĕ. Вырнаçса ларăр. Эпĕ халех. (*Хăй пўлĕмне каять.*)

**Пăртуççи** (*кĕрет*). Мĕнле вара, Ваççа, хăш лашине кўлмелле?

**Ваççа.** „Орлика" мĕн пулнă?

**Пăртуççи.** „Орликне" шкул вутти патне кўлсе кайрĕç.

**Ваççа.** Мансăрăнах-и? Кам ирĕк пачĕ?

**Лиза сасси.** Ан хĕрўлен. Эпĕ сана ирхине курса калаймарăм.

**Ваççа.** А-а, апла пулсан юрать. (*Пăртуççие.*) Леш „Атамана" кўлес.

**Пăртуççи.** Ăна халиччен кӳлмен те...
**Ваççа.** *Улăхран утă кӳме* те пымасть-и?
**Пăртуççи.** Çамрăк-ха вăл.
**Ваççа.** Каять, каять. Эпĕ хам та çамрăк. Айта, яра пар.
**Пăртуççи.** Кӳлсе пăхар эппин. (*Каять.*)
**Лиза** (*хăй пӳлĕмĕнчен тавăрăнать.*) Ну, пурте пур-и?
**Ваççа.** Пурте.
**Лиза.** Акă мĕн, юлташсем. Пирĕн колхозăн икçĕр кубометр вутă касса хатĕрлемелле. Кашни бригадăран çичшер çын. Вунă кунта пĕтерсе килеççĕ. Бригадирсем, каçчен çынсене тупса хатĕрлетĕр те мана килсе калатăр. Юрать-и?
**Пурте.** Юрать.
**Матрӳне.** Ман бригадăра: Иван арăмĕ, пĕрре, Лексантăр арăмĕ, иккĕ, Степан Петрович, виççĕ...
**Лиза.** Степан Петрович каяймасть, ăна валли урăх ĕç пулать (*Сохрона.*) Вăрман касма каякансене: пиллĕкшер кило какай, пилĕкшер кило пăрçа, пĕрер кило пыл парса ятăн. Юрать?
**Сохрон.** Çуршар литр эрех.
**Лиза.** Эрехне те парăпăр. Так. Иккĕмĕш ыйту вăл, чăпта çаптарасси.
**Сохрон.** Чăпта çапасси вăл çĕнĕрен вĕренес ĕç мар-ха...
**Лиза.** Çавăнпа та ыранах тăхăр лав ярас та курăс турттарса килес. Кашни бригадăран виçшер лав. Юрать-и?
**Пурте.** Юрать, ярас.
**Лиза.** Чăпта çапассине ачаллă арăмсем те пултараççĕ. Килти ĕç, ăшă пӳртре.
**Ваççа.** Вутти ăçта?
**Лиза.** Епле ăçта? Халь çеç виçшер кубометр кӳтĕмĕр.
**Ваççа.** Вăл çăварниччен хутма та çитмест.
**Лиза.** Унччен татах виçшер кубометр пулать. Пурте хамăртан килет. Так. Чăпта çаптараканни Степан Петрович пулать. Матрӳне, кала эсĕ ăна, каçхине ман пата килтĕр вăл. Так. Саланма та пултаратăр. (*Горшков каять. Матрӳнене чарса.*) Ну, мĕнле, çĕнĕ бригадир, çĕмĕрттеретĕн? (*Ыталаса силлет.*) Маттур, Матрӳне аппа, мат-

тур! Пур хĕрарăм та сан пек пулсан... (*Çурăмĕнчен выляналла чышса, ăсатса ярать. Ваççана.*) Ну, мĕнле, Ваçça, инкесем халĕ те итлемеççĕ-и-ха?

Ваçça. Халь итлеççĕ.

Лиза. Маттур, маттур. Сана, хăвна питĕ йывăр-ха, ачам. Шкула та çӳремелле, бригадирта та ĕçлемелле. Йывăр вĕт?

Ваçça. Йывăр, Елизавета Ивановна. Анчах, эпĕ колхозра ĕçлемесен, ман чирлĕ аннене кам тăрантарĕ?

Лиза. Отметкăсем мĕнле-ха санăн?

Ваçça. Кăçал начартарах, пĕлтĕр пĕтĕмпех отлично пулнă та...

Лиза. Сана вĕренӳ çулĕ пĕтиччен бригадиртан хăтарас тетĕп эпĕ. Вĕренме пăрахсан, çулла, каллех бригадир пулăн. Аннӳне тăранма колхозран тыră парăпăр.

Ваçça. Чăнах-и, Елизавета Ивановна?

Лиза. Чăнах.

Ваçça (*ташласа*). Ух, пĕрре вĕренетĕп ĕнтĕ... (*Каять.*)

Сохрон. Лизавета Ивановна, манăн пĕр ĕç çинчен сӳтсе явмалли пур та...

Лиза. Мĕнле, пысăк ĕçех-и?

Сохрон. Сирĕншĕн темле те, маншăн питĕ пысăк ĕç.

Лиза. Мĕнле ĕç-ши?

Сохрон. Манăн çурт...

Лиза. Каллех çурт.

Сохрон. Манăн чун ыратать вăл çуртшăн. Пĕтĕм ăш çунать.

Лиза. Эсĕ кала, мĕн пулнă сана? Мĕншĕн кансĕрлет вăл çурт? Арăмна юласран хăратни?

Сохрон. Юласси çăва патне-ха вăл. Такам малтан вилет.

Лиза. Эсĕ арăмунтан уйăрăлнă вĕт-ха?

Сохрон. Кам каларĕ?

Лиза. Арăму хăй каларĕ. Мĕншĕн-ха, эппин, эсĕ киле çӳреместĕн? Мĕншĕн сивĕнтĕн?

Сохрон. Арăмшăн мар, çуртшăн.

Лиза. Çурт кăмăла каймасть-и мĕн сана?

**Сохрон.** Çурт кăмăла каймасть çав.

**Лиза.** Сут та яр.

**Сохрон.** Сутас тетĕп çав. Мĕн чухлĕ пама юрать-ши? Çавна хаклама комиççи тăвасшăнччĕ те...

**Лиза.** Мĕн тума комиççи? Пĕр çирĕм пилĕк пин тăрать пулĕ.

**Сохрон.** Çирĕм пилĕк пин? Çирĕм пилĕк пин çеç тăрать-ши?

**Лиза.** Эсĕ тырă хакĕпе шутла. Миçе пăта ларнă вăл сана?

**Сохрон.** Çирĕм виçĕ пăта.

**Лиза.** Унтан кая ан пар.

**Сохрон.** Юрать (*хăйне хăй*). Укçан тӳлес тенĕччĕ те. Кайса хам тыррах тиесе килес пуль (*каять*).

**Лиза** (*Якура.*) Çĕнĕ хаçатсем пур-и?

**Якур** (*Лиза пӳлĕмĕнчен тухса*). Сирĕн пек пултаруллă хĕрарăмшăн темĕн те пур (*хаçатсем парать*). Ĕнерхи.

**Лиза.** Санăн хăçан-ха комиççине каймалла?

**Якур.** Ыран.

**Лиза.** Да...

**Якур.** Лиза, эпĕ санран акă мĕн ыйтасшăнччĕ. Эсĕ мана армине каясран хăтăлмалли хут туса памăн-ши?

**Лиза.** Хут? Мĕн тума вăл? Манăн нимĕнле права та çук.

**Якур.** Епле çук? Çав тери кирлĕ çын тесе... Тата уншăн çеç те мар...

**Лиза.** Тата мĕншĕн?

**Якур.** Эсĕ çаплах ĕненместĕн-и? Эпĕ сана юратнине, ял çыннисем çеç те мар, пĕтĕм тĕнче пĕлет пулĕ.

**Лиза.** Ытла эс...

**Якур.** Эпĕ саншăн тĕрмене лекрĕм.

**Лиза.** Маншăн?

**Якур.** Саншăн! Сана юрас тесе. Ĕлĕк çамрăк чухне эпĕ сан куçу умне тăма та вăтанаттăм. Манăн авланиччен çынсем пекех çурт лартас килетчĕ. Çынсенчен те авантарах тумланса çӳрес килетчĕ.

**Лиза.** Ҫавӑнпа вӑрларӑн пулать.

**Якур.** Йӑнӑшнӑ. Ҫамрӑк пулнӑ. Пурнӑҫ тутине пӗлмен.

**Лиза.** Халӗ пӗлетӗн-и ӗнтӗ?

**Якур.** Халӗ эпӗ саншӑн тем тума та хатӗр. Анчах эсӗ ан хӑра, текех вӑрлама каяс ҫук.

**Лиза.** Халӗ ун ҫинчен калаҫма вӑхӑт мар. Ӗҫлес пулать. Манӑн ахаль те пуҫ ыратать.

**Якур.** Пӑхатӑп, пӑхатӑп та эпӗ сан ҫине, ҫав тери хӗрхенетӗп. Упӑшка хӳттинче нимӗн пӗлмесӗр пурӑнас чух, вӑл типпе тухса ӳкнӗ пулӑ пек асапланать. Эсӗ, ҫакӑн пекех ӗҫлесен, тепӗр виҫ уйӑхран вилетӗн. Чӑнах. Пӑх-ха эсӗ хуна ху тӗкӗр витӗр. Мӗн тӑрса юлнӑ эсӗ?

**Лиза.** Мӗн тӑвас тетӗн, вӑрҫӑ...

**Якур.** Вӑрҫӑ тесе, вӑхӑтсӑрах ватӑлса лармалла-и?

**Лиза.** Ҫынсем ӗмӗрлӗхех пуҫӗсене хураҫҫӗ те.

**Якур.** Касса татрӑн. Шарламастӑп.

**Лиза.** Шарламастӑн-и?

**Якур.** Санпа калаҫма аптӑрамалла. Эпӗ сана хӗрхенсе ҫеҫ. Эсӗ мана кураймастӑн пулсан та, эпӗ сана юрататӑп. Хӑть те кирек мӗн ту.

**Лиза.** А эпӗ пӗтӗмпех маннӑ. Санпа нумай калаҫман вӗт-ха.

**Якур.** Суятӑн. Пӗрремӗш юратӑва никам та манма пултараймасть.

**Лиза.** А эпӗ маннӑ.

**Якур.** Апла эсӗ мана чӗрне хури тӑршшӗ те юратман?

**Лиза.** Эпӗ ун пек юратӑва юрату теме пултараймастӑп.

**Якур.** Мӗншӗн?

**Лиза.** Эпир пӗр-пӗрине юратни мӗн патне илсе ҫитерӗччӗ-ши пире? Сана вӑрра вӗренме, мана—эсӗ вӑрласа пуйнипе ӗҫлемесӗр пурӑнма. Ҫапла-и? Мана ун пек юрату кӑмӑла каймасть. Юрату вӑл пурӑнма пулӑштӑр, ӗҫе хавхалантарса пытӑр. Вот эп Платона юратрӑм. Унӑн хитрелӗхӗшӗн ҫеҫ мар, унӑн пӳ-ҫийӗшӗн мар. Унӑн тӳрӗ кӑмӑлӗшӗн. Унӑн ӗҫӗшӗн. Эпӗ, вӑл ӗҫленине кура, хам та ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеттӗм. Темле йывӑр ӗҫре те кун

kaçни сисĕнместчĕ. Каç пулсан, савнă каччăна курас килетчĕ. Çĕнĕ хыпарсем, çĕнĕ ĕмĕтсем чун хавалне çĕклетчĕç. Пирĕн пĕтĕм ĕмĕт—лайăх ĕçлесе, çитес çул татах Мускава ялхуçалăх выставкине лекес ĕмĕтчĕ.

**Якур**. Халь вăл ĕмĕте ĕмĕтленмелли çук ĕнтĕ, Платон текех таврăнас çук. Лиза, чăнах калатăп: эпĕ сана юратман пулсан, киле те килес çукчĕ. Çырса пар мана хут, тен ыран комиççире кирлĕ пулĕ. Туршăн та, эпир санпа пит аван ĕçленĕ пулăттăмăр.

**Лиза**. Чăн та, ĕçленĕ пулăттăмăр.

**Якур**. Лиза, çырса паратăн эппин?

**Лиза**. Лăркаса ан ларнă пултăр ман умра! Эсĕ, тăван çĕршывшăн мар, хăвăн чунушăн çеç тăрăшатăн иккен? Хăравçă! Çынсем вăрçăра аманаççĕ те суранĕсене пăхмасăр вут-хĕм айне тăраççĕ. Пемелли пĕтсе çитсен, хăйсен пуçĕсене шеллемесĕр, гранатăсене хăйсем çумне çыхса, танк айне вăркăнаççĕ. Çынсем госпитальрен тухнă-тухман хăйсен ирĕкĕпе фронта каяççĕ. А, эсĕ? Мана юрататăн иккен?! Мана курма васканă?! Мана юрататăн пулсан, мĕншĕн вăрçă хирне каясшăн мар. Эпир çĕнтерейместен, мĕн тума кирлĕ мана санăн юратăву? Тăван çĕршыва ытларах юратасчĕ санăн.

**Якур**. Эпĕ халĕ те тăван çĕршыва...

**Лиза**. Саншăн тăван çĕршыв вăл—эсĕ хута, хăвăн çурту. Унтан малаллине эсĕ курасшăн та мар. Тăван çĕршыв вăл, çуралнă çуртран пуçлантăр та, пĕтĕм совет çĕршывĕпе сарăлтăр. Кам çавна ăнланать, кам çавна пĕтĕм чĕререн юратать, çавăн пек çынна юрататăп. А эсĕ, кама юрататăн? Хăвна ху?

**Якур**. Эпĕ шухăшланăччĕ.

**Лиза**. Пĕлетĕп эпĕ сана ĕлĕкреппех. Эсĕ ĕлĕкхинчен пĕр пит те улшăнман иккен. „Аван" счетовод! Сана, кун пек калаçнă хыççăн счетоводра хăварасси çинчен мар, счетоводран кăларасси çинчен ыйту лартмалла. (*Кайма тăрать.*)

**Якур**. Лиза...

**Лиза.** Авă, стенапа калаç (*каять*).

**Якур.** Каллех нимĕн те тухмарĕ.

**Матрӳне** (*кĕрет*). А-а, кунтах иккен. Эсĕ мĕн, Хвекларан, виç-тăватă ачаллă арăмран, мăшкăлас терĕн-им? Е, вĕсем, выçă пурăнса, пĕтĕмпех вилсе пĕтчĕр терĕн-и?

**Якур.** Мĕн пулнă, Матрӳне аппа?

**Матрӳне.** Мĕн пулнă? Хăвăн ыран-паян комиççине каймалла, теççĕ. Ху фронта тухса кайиччен пире, ухмах хĕрарăмсене, лартса хăварас терĕн-и? Çук, ачам, вăл сан хырăмушăн ĕçлемен. Унăн хăйĕннех манешкел, тăваттăн лараççĕ.

**Якур.** Мĕн çинчен калаçатăн эсĕ?

**Матрӳне.** Хвекланне мĕншĕн ĕç кунĕсене вăрлатăн?

**Якур.** Хвекланне? Хвеклашăн сана мĕн ĕç.

**Матрӳне.** Епле мĕн ĕç! Хвекла вăл ман бригадăра, эпĕ хам бригадăри хĕрарăмсемшĕн вута та кĕрсе каятăп. Кала, мĕншĕн вăрларăн?

**Якур.** Мĕнле вăрларăн?

**Матрӳне.** Мĕншĕн тĕрĕс кӳртсе пымастăн? Хăйĕн аслă ачи çырса пынипе 348 ĕçкунĕ тухать те... а эсĕ 318 анчах туса панă. Ăçта чикрĕн вăтăр ĕçкунне?

**Якур.** Бригадир тĕрĕс çырса паман пулĕ. Ара, пĕчĕк ачасене бригадир тунă та...

**Матрӳне.** Куна пĕчĕк ача çырман. Хам çырса пынă. Ман шутпа та 348 ĕçкунĕ тухать. Ăçта хутăн вăтăр ĕç кунне?

**Якур.** Аптăрамалла.

**Матрӳне.** Халех çутăлтарса яратăп эп сана. Кӳртсе панă пултăр.

**Якур.** Мĕнле кӳртем-ха эпĕ. Сан сăмахху тăрăх çырма пултараймастăп вĕт эп.

**Матрӳне.** Сăмахпа мар. Ĕç кĕнеки тăрăх (*каять.*)

**Якур.** Кунта та ĕç тухмарĕ.

**Пăртуççи** (*кĕрет*). Лиза, кунта-ши?

**Якур.** Мĕн пулчĕ сана?

**Пăртуççи.** Сахрун тырра илсе каять вăн.

**Якур.** Эсĕ ан парса яр. Вăл килтен пăрахса кайнă вĕт, халĕ килте эсĕ ху хуça.

**Пăртуççи.** Хуçа! Эпĕ мар, эсĕ пултăн хуça. Кирлĕ мар мана санăн тырру! Çав тырă пиркиех Сахрунпа та уйăрăлтăмăр. Пĕтертĕн эсĕ пирĕн ĕмĕре. Пыл катки çине пĕр кашăк тикĕт янă пекех вараларăн. Урăх тӳссе пурăнаймастăп. Килетĕп те çакăнта, пĕтĕм халăх умĕнче каласа паратăп. Манăн чун таса пултăр. Старикпе килĕштерсе пурăнасси—сан тыррунтан пин хут хаклăрах.

**Якур.** Эпĕ тырăшăн пилĕк çул ларса тухрăм, халĕ сан ларас килет-и?

**Пăртуççи.** Эсĕ вăл тырăшăн ларман, мана куç умĕнчех ан суй.

**Якур.** Кам сана вăрланă тырра йышăнма хушрĕ?

**Пăртуççи.** Эсĕ ху вăйпах, ирексĕрпе пĕрех пырса хутăн.

**Якур.** Пур-пĕрех, йышăнас кăмăлу пулман пулсан, мĕншĕн тепĕр куннех кайса систермерĕн? Мĕншĕн суд умĕнче пытарса хăвартăн? Эсĕ, шăлна çыртатăн пулсан, çырт; унсăрăн лекетĕн.

**Пăртуççи.** Ах, турă!.. Мĕн туса хурам-ши хама-хам!.. Лиза ăçта-ши хăть... (*Каять.*)

**Якур.** Кунпа та ĕç тухмасть пулас. Нимĕнех те тăваймарăм. Эх!.. Ыран комиççине каймалла... алă тӳрленсе çитрĕ...

Якраççи (*кĕрет*). Куна мĕн пулнă вара, çил арманĕ пекех вĕçтерчĕ?

**Якур.** Эсĕ пĕлместĕн-и вара? Сохронĕ тырă тиесе тухса кайрĕ, тет, вăн.

**Якраççи.** Мĕн тума-ши?

**Якур.** Лизăпа Сохронĕ те çакланнă хайхи... Сохронĕ завхоз пулнăранпа темиçе тонна тырă тухмасть, тет.

**Якраççи.** Чăнах-и?

**Якур.** Чăн пулмасăр. Фермăсем валли пĕр тырă та юлмасть ĕнтĕ. Халь ун çинчен никам та пĕлмест. Пĕр эпĕ çеç пĕлетĕп. Çавăнпа вĕсем халь хăйсен тыррине хурасшăн. Çавăнпа кускалаççĕ те.

**Якраççи.** Лекрĕç пулать, аранах.

**Якур.** Лекрĕç çав. (*Кантăкран Лиза килнине курса.*) Акă хăй килет. Юриех тырă ыйтса пăх-ха, мĕн тет.

**Якраççи.** Юри мар-ха, эпĕ ахаль те тырă ыйтасшăнччĕ.

**Лиза** (*кĕрет*). А-а, Якраççи килнĕ. Ман пата-и?

**Якраççи.** Сан пата çав, сан пата.

**Лиза.** Мĕн ĕçпе-ши?

**Якраççи.** Пĕр виçĕ пăт тырă ыйтса пăхасшăнччĕ те...

**Лиза.** Тырă?! Тырă валеçни уйăх та çитмен-çке.

**Якраççи.** Çапла пулĕ те... Манăн паян çимех çук-çке.

**Лиза.** Мĕншĕн çук? Ĕçлемен. Çав пĕр пыра та тăрантараймастăн-и?

**Якраççи.** Малашне ĕçлес тетĕп те ĕнтĕ...

**Лиза.** Кăçалхи тырă çук ман, ÿлĕм, уйран пухса кĕрсен, парăпăр.

**Якраççи.** Мĕнле-ха апла?..

**Лиза.** Çаплах. Санăн çук, сынсен мĕншĕн пур? Çынсем ĕçленĕ, эсĕ ĕçлемен. Ытти хĕрарăмсем уйра çĕр выртса тырă вырчĕç, государство валли те, хăйсене валли те пултăр теççĕ. А эсĕ? Ĕç патне тухмалла чух бригадирсем сана кĕç ÿксе пуççапмаççĕ. Çын çитмест. Тырри тăкăнать, юр айне каять. А эсĕ, çынсем хĕрсе тырă вырнă чухне, мунча хутса кĕретĕн, çĕрле пасара тухса таратăн. Çăвĕпе пасартан пасара юрласа çÿрерĕн пулсан—халĕ, акă, кай та ташла (*Хăй пÿлĕмне кĕрсе каять.*)

**Якраççи.** Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ манăн?

**Якур.** Ыран-паян ревизи пулмалла, çавăнтан хăраса нимĕн тума пĕлмесĕр вăрçать. Халех пĕтĕм колхозниксене систерес пулать. Отчёт тунă хыççăн Лизине кăларса çапма хатĕр пулччăр. Председатĕле кама суйласси çинчен шухăшласа пăхчăр. Ытах тупаймаççĕ пулсан, эпĕ хам та ĕçлеме хирĕç мар. Ыран комиççире мĕн калаççĕ-ха тата.

**Якраççи.** Санах суйлас пулать ĕнтĕ, санах.

**Якур.** Эсĕ унпа лайăх пулма тăрăш. Ан хирĕç. Юри сăмах сарнă тесе, вăл сута та парĕ. Халĕ чĕлхене хытă тытас пулать.

**Якраççи**. Çапла çав. Лектереççĕ, нимĕн те мар лектереççе.

**Лиза** (*кĕрет*). Кама лектереççĕ?

**Якраççи**. Уй-касра пĕр çынна кайса хупнă та, çавăн çинчен калаçатпăр мар-и.

**Лиза**. Мĕншĕн тет?

**Якраççи**. Çынни нимех те каламан, тет. „Пĕр шухăшласан, кăçалхи çул ĕçлес те килмест", тесе каланă, тет те... Попой ялĕнче тата тепĕр çынна „Хаçатра çырни пурте тĕрĕс мар пулĕ" тесе каланăшăн, тет. Эпĕ хам илтмен те-ха... çын сăмахĕ тăрăх çеç те...

**Лиза**. Эсĕ, чим-ха (*хут çырать*). Ме, çакна халех сельсовета леçсе пар.

**Якраççи**. Кама памалла, председателе-и?

**Лиза**. Милицине.

**Якраççи**. Милицине? Юрать (*каять*).

**Лиза**. Кун çăварне хуплас пулать, епле сăмахсем сарать вăл, илтрĕн-и?

**Якур**. Эх, астуман та... Якраççин ĕçкунĕ кĕнеки кунтах выртса юлнă. (*Якраççи хыççăн тухса чупать.*)

**Лиза**. Тĕлĕнмелле. Мĕншĕн-ха Якраççипе Якур пĕрпĕринчен нихçан та хăпаймаççĕ. Ку, Якур, маншăн темле пăтранчăк çын пек туйăна пуçларĕ. Мĕншĕн-ха вăл, е нимĕн те ĕçлемесĕр сăтăр тăвасшăн, е çав тери аван ĕçлет. Мана юрататăп, тет. Çав хушăрах мана курайманни те сисĕнет. Мĕншĕн-ха вăл мана юрататăп, тет? Юрать. Эпир те „юратма" пуçлăпăр ăна. Ун чух, тен, вăл мĕнле çын иккенне те пĕлме пулать.

**Якур** (*кĕрет*.) Парса ятăм.

**Лиза**. Маттур, колхозницăсемшĕн тăрăшни тӳрех палăрать.

**Якур**. Ку мĕне пĕлтерет?

**Лиза**. Çанталăк уяр тетĕп-çке. (*Пауза*.) Якур, мĕн калаçма пăрахрăн.

**Якур**. Ху мапран тăрăхлатăн та...

**Лиза**. Хăçан?

Якур. Калаканĕ манать, тет, илтекенĕ манмасть, тет.

Лиза. Халĕ эсĕ манран тăрăхлатăн.

Якур. Санпа калаçма пĕлмелле мар.

Лиза. Ак тата. Паянхи кунпа пурăнман çынсене чăнах та юратмастăп эпĕ. Калаçас та килмест. Кам хавхаланса ĕçлет, кам темĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерсе пырать, çавăнпа манăн калаçас килет, ăна манăн ал вĕççĕн çĕклесе, пĕтĕм тĕнчене кăтартас килет. Акă, Матрŷне аппанах илер: упăшки вăрçăра вилчĕ, килĕнче тăватă ача, анчах кирек мĕнле ĕç хуш, нихçан та иккĕленсе тăмасть. Вот хăть çын! Пĕлет вăл, камшăн тата мĕншĕн ĕçленине. Пĕр сăмахпа каласан, кăçал хĕрарăмсем аван ĕçлерĕç. Маттур. Куçпа виçсе илмелле мар ĕçе çĕнтерсе хучĕç.

Якур. Анчах, эпĕ ĕçленине эсĕ пĕрре те курмастăн.

Лиза (*аяккалла*). Мухтас-ха, мĕн калать (*Якура.*) Куратăп, Якур, куратăп. Эсĕ те, аван ĕçлеме пултаратăн.

Якур Пĕрлешетпĕр-и, Лиза?

Лиза. Çук.

Якур. Мĕншĕн?

Лиза. Усси пулас çук.

Якур. Мĕншĕн?

Лиза. Санăн ыранах комиççине каймалла вĕт.

Якур. Тен хăвараççĕ, Лиза, а? Пĕрлешетпĕр-и?

Лиза (*юри*). Эсĕ мана юратмастăн вĕт.

Якур. Мĕн калаçатăн, Лиза.

Лиза (*юри*). Кай (*Якура çурăмĕнчен чышса, хăвăрт тухать*).

Якур (*тĕлĕнсе*). Мĕн пулчĕ куна? Нихçан та манпа выляманскер... Ĕç мая каять пулас. Так, ĕç ăнать. Ыран комиççинче юласси çеç юлать. Ăна качча илсен... Курăн мана эп камне?!

Ваççа (*кĕрет, хаçатсем тытнă*). Почта, почта килчĕ.

Якур. Хур.

Ваççа. Мана пĕр хаçатне парса яр-ха, кайса конюхсене вуласа парам.

**Якур.** Илсе кай, Васса. Илсе кай!

**Васса.** Эпĕ халех леççе паратăп (*каять*).

**Якур** (*хаçат тытса*). „Сталинград патĕнчи çапăçу"... „Ультиматум" (*хăраса ÿкет*.). Нимĕççен армине ультиматум лартнă (*Шухăша каять.*) Пĕтрĕ пĕтĕмпех. Эпĕ те кунта нимĕн те тăваймарăм. унта тата хăрушăрах (*Нимĕн тума пĕлмесĕр утса çÿрет.*) Неужели çаплахши? (*Хаçата çĕнĕрен вулама тытăнать.*) „Пирĕн земляк". Шупашкар районĕнчи, „Социализм" колхоз председателĕ пулнă... Платон Спиридонович, Спиридонов... Платон Спиридонович... „Социализм" колхоз (*Кăшкăрса ярать.*) Вилмен!.. (*Хăраса.*) Чĕрĕ-ши вара? (*Вулать.*) „Орденпе наградăланă... Партизансен отрячĕн пуçлăхĕ"... Мĕншĕн партизансен пуçлăхĕ?.. Вилмен! (*Пауза*). Кунта юлма мар, хăвăртрах тарас пулать. Тавта пуç ыран комиççине каймалла, хам ирĕккĕнех вĕçтеретĕп те, унта куç курать (*Кантăкран курса*). Лиза килет. (*Хаçатне ниçта хума аптăраса, кăсъине лутăркаса чикет.*)

**Лиза** (*кĕрет*). Мĕн пулнă сана?

**Якур.** Çук, нимĕн те пулман-çке.

**Лиза.** Тем, пăшăрханса ÿкнĕ пек те...

**Якур.** Çук.

**Лиза.** А-а, эпĕ, мана юратнипе вăтанса çухалса кайнă тесе.

**Якур.** Çук, Лиза, эпĕ...

**Лиза.** Çураки планĕ хатĕрлеме хушнăччĕ, турăн-и?

**Якур.** Килте. Халех илсе килетĕп (*каять*).

**Лиза** (*пауза*). Ку Платон чăнахах пĕтрĕ-ши? Штаба Платона шыраса çыру ярас пулĕ (*çырма ларать*). Пуçа нимĕн те кĕмест... Ывăнса çитрĕм пĕтĕмпех. Хăçан канма вăхăт пулать-ши? Кай, каçхине çырас... (*Хаçат вулама ларать.*) „Асра тыт". „Шклов хулинче, нимĕççем, ултă пин таран совет гражданĕсене персе вĕлернĕ те пысăк шăтăк чавса пĕр шăтăка купаланă... Унтан мĕн пур ачипăчисене пухнă та чĕрĕллех çав шăтăка пăрахса тăпрапа витнĕ... Виçĕ кун çав масар çинчи тăпра йăшăлтатнă.

Виçĕ кун çав ачасем вилеймесĕр пĕчĕк алли-урисемпе тăпрана канăç паман... „Виçĕ кун, масар çинчи тăпра йăшăлтатнă... Хосподи... Сивĕсĕр шăнса каймалла. (*Сасăсăр вуланă хыççăн*) „Инженер, служащий, колхозник, эсир темле йывăрлăх тӳсетĕр пулин те сире çапах та фронтринчен çĕр хут çăмăлтарах. Ту çине улăхма тăтăн пулсан, темле йывăр пулсан та, ту тăррине çитмесĕр ан чарăн. Улăхса çитиччен ывăнса чарăнтăн пулсан, аса ил Шклов хулин масарĕ çинче виçĕ кун хушши тăпра йăшăлтатнине, вара сана çĕнĕрен вăй кĕрĕ, нимĕççене курайманлăх пин хут ӳссе кайĕ, унтан эсĕ, çитес çĕре çитетĕнех" (*Пауза*). А, эпĕ, ту çине улăхма тытăннă çеç, ывăннă та (*хастарланса*). Çук, ураран ура иртми пултăр, куç курми пултăр та, эпĕ тытăннă ĕçе пăрахмастăпах (*аса илсе*). Виçĕ кун, масар çинче тăпра йăшăлтатнă...

**Якур** (*кĕрет*). Плансене илсе килтĕм.

**Лиза**. Юрать. Хур. Якур, çакна вуланă-и эсĕ?

**Якур** (*хăраса*). Мĕн?

**Лиза**. Шклов хулинче мĕн пулса иртни...

**Якур**. А-а, ăна вуланă... Эх, Лиза! Эпĕ халь пĕтĕмпех ăнланса çитрĕм. Халĕ мана хăварасси пирки хут-мĕн тума кирлĕ мар. Эпĕ хам ирĕккĕн тухса каятăп. (*Урамра Сохрон „тпру!" тени илтĕнет.*)

**Лиза** (*кантăкран пăхса*). Ку, Сохрон мĕн турттарса килчĕ тата?

**Пăртуççи** (*кĕрет*). Çапла хăтланма пуçларăр-и-ха? Колхоз тыррине салатса ятăр та халĕ килĕрен пуçтаратăр-и?

**Лиза**. Кам пуçтарать? Мĕн ухмаха ерсе çӳретĕн эсĕ?

**Пăртуççи**. Вон, Сахрун пĕр лав турттарса килчĕ. Тырăсăр хăвартăр пулать пĕтĕм халăха.

**Лиза**. Мĕн сӳпĕлтететĕн эсĕ? Кам каларĕ сана.

**Пăртуççи**. Кам каларĕ? Пĕлмеççĕ терĕр-им?

**Сохрон** (*кĕрет. Кăшт хĕрĕнкĕрех.*) Ну, Лизаветă Ивановна, пĕр лав тырă тиесе килтĕм, тухса йышăн.

**Лиза**. Мĕнле тырă? Кам валли?

**Сохрон.** Пĕр пилĕк-ултă çул каярах пулнă ĕç-ха вăл, вăрланă тырра ман арăм йышăнса юлнă та... Çавна каялла леçсе парас терĕм.

**Лиза.** Вăрланă тырă? Тырри камăн пулнă?

**Сохрон.** Колхозăн.

**Лиза.** Кам вăрланă?

**Сохрон.** Якур.

**Якур.** Епле хăятăн? Халĕ тин мĕн асăнмалли пур ун çинчен. Ултă çул иртнĕ япала.

**Сохрон.** Сана халĕ тин никам та айăпласшăн мар. Анчах ман чĕрене епле кăшларăн эсĕ? Çулталăк ытла асаплантăм, çулталăк ытла киле çӳремерĕм. Халĕ те çакăнта пите тăла варри витсе килтĕм. Мейĕр, илĕр. Манăн кăмăл таса пултăр.

**Пăртуççи.** Эсĕ çав тырра тавăрас терĕн-и, старик?

**Сохрон.** Çавна çав.

**Пăртуççи.** Халь ĕнтĕ киле те пыратăн пулĕ?

**Сохрон.** Эпĕ санран нихăçан та уйăрăлман, карчăк.

**Пăртуççи.** Мĕн тата Якраççи ял тăрăх янтăраса çӳрет: „Лиза", тет „Сахрун", тет „Колхоз тыррине салатса янă та"... тет, „халь акă килĕрен пухаççĕ ĕнтĕ" тет.

**Якур.** Якраççи! Ай, чĕлхе!.. Ох чĕлхе!... Мĕншĕн чĕлхине касса илекен çук çавăнне.

(Спиридон, Мархва, Матрӳне, Горшков тата колхозниксемпе колхозницăсем кĕреççĕ).

**Спиридон.** Килĕрен тырă пухаççĕ, тесе ят сарнă... Тĕрĕс-и, суя-и ку сăмах.

**Лиза.** Якраççи сарнă, тет та-ха... Анчах ăна кам каланă...

**Спиридон.** Якраççи пасăрах района кайрĕ вĕт вăл.

**Горшков.** Района кайичченех вăл урамра кама курнă çавна каласа çӳретчĕ.

**Якур.** Елизавета Ивановна, ман вырăна çын тупмалла пулать пулĕ. Эпĕ ыран каятăп ĕнтĕ.

**Лиза.** Çынне тупăпăр.

**Якур.** Эпĕ кĕçĕрех, каç выртмалла каясшăнччĕ.

Лиза. Килĕнте мĕнле хутсем пур, çавсене илсе кил, йĕркелесе пар та хăть те кирек ăçта кай.

**Якур.** Юрать, эпĕ халех (*Каять*).

Лиза. Юлташсем, пуçтарăнса ларăр-ха. Каçхине пуху пуçланиччен эпир, колхоз активĕ пĕр ĕç пуçарса хурар-ха (*Пурте лараççĕ, шăпланаççĕ.*) Юлташсем, эсир Головатов юлташ пуçарса янă ĕç çинчен пурте илтнĕ пулĕ, пурте пĕлетĕр. Çавăнпа та нумай калаçса тăмасăрах, танк колоннине, кам мĕн чухлĕ хывас тет, çавăн çинчен шухăшлăр. Паянхи сводкăра, юлашки сехетĕнче, пирĕн войскăсем ĕнер пилĕк хула илни çинчен пĕлтернĕ. Вĕсем шутĕнче: Георгиевск, Пятигорск, Кисловодск, Железноводск, Минеральные воды тата пысăк районăй центрсене илнĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕсем татах ăнса пыччăр тесе, пулăшар-ха, юлташсем, камăн мĕн чухлĕ вăй çитнĕ таран. Каçхине колхоз пуххи пуçăниччен, эпир, колхоз активистчĕсем, кăтартар-ха хамăр тăван çĕршыва епле юратнине. (*Пауза.*) Эпĕ, хам акă, юлташсем, алă пин тенкĕ паратăп.

**Спиридон.** Çыр!

**Ваçça** (*чупса кĕрет*). Платон килчĕ? Платон килчĕ!..

**Пурте** (*тĕлĕнсе.*) Платон?!

**Ваçça.** Платон çав. Халех кунта килет. (*Пурте Платон кĕрессе кĕтсе тăраççĕ.*

**Платон** (*кĕрет.*) Здравствуйте! Сывă-и пурсăр та!

**Лиза** (*нимĕн тума аптăраса, Платон ытамне пырса тайăнать.*) Платон!.. ((*Чуп тăваççĕ.*). Мĕн чухлĕ хыпар кĕтрĕмĕр санран. Вилнех пуль ку, тесе пурăнтăмăр.

**Платон.** Вилмен! Вилме юрать-и вара. (*Пурне те алă тытать.*) Сывă-и, юлташсем.

**Пурте.** Сывă-ха. Мĕнле килме пĕлтĕн! Хăш турă çавăрса килчĕ сана... Хăвăн сывлăху мĕнле?

**Платон** (*ашшĕне.*) Сывă-и, атте-анне! (*Чуп тăвать.*)

**Спиридон.** Çыру çырма май килмерĕ-им, ачам.

**Платон.** Вăрçа кĕрсенех пĕр уйăх окруженинче пултăмăр. Кайран, хамăрăннисем патне шăтарса тухас чух,

мана парторганизаци тыла, партизансем патне, хăварчĕ. Эпĕ, вара, çак таранччене унта тăшмана хирĕç партизансемпе пĕрле çапăçрăм. Пирĕннисем, тăшмана хĕссе пырса, эпир пурăнакан вырăна та персе çитрĕç те, эпир вара Хĕрлĕ Çарпа пĕрлешрĕмĕр. Халĕ пире унтан хĕвеланăçнелле куçармалла турĕç. Ну, çула май киле кĕрсе тухма ыйтрăм.

**Спиридон.** Ку орденне мĕншĕн пачĕç?

**Платон.** Партизансене аван ертсе пынăшăн.

**Спиридон.** Партизансене аван ертсе пынăшăн? Аван, аван. Матур, ывăлăм.

**Мархва.** Аманмарăн-и, ачам?

**Платон.** Тăвата çĕртен çеç, анне.

**Мархва.** Епле чĕрĕ юлтăн, ачам?

**Якур** (*хутсем çĕклесе кĕрет*). Хутсене пĕтĕмпех илсе килтĕм (*Хутсене сĕтел çине хурать те Платонпа куçа-куçăн пулать.*)

**Платон.** Эсĕ... (Кунта-и вара? (*Якур çине кăтартса*) Куна ниçта та ан кăларăр.

**Пурте.** Мĕн пулнă вара?

**Платон.** Российăри мĕнпур халăх нимĕç çĕлен-калтипе çапăçать. Фронтра маррисем, пĕтĕм ватти-вĕтти те, кар тăрса, вăй çитнĕ таран фронта пулăшаççĕ. Ашшĕ-амăшсем, хăйсен ывăлĕсене, арăмĕсем, хăйсен упăшкисене, танксем, самолётсем илсе параççĕ. Мĕнпур халăх хăйĕн юратнă çарне пулăшать. Рабочисем, çĕрне-кунне пĕлмесĕр, пиллĕкшер норма кăларса, фронтшăн тăрăшаççĕ. Фронтра, боецран пуçласа маршал таран, хăйсен пуçĕсене шеллемесĕр нимĕç ирсĕрĕсемпе çапăçаççĕ. Çавăн пек вăхăтра, пирĕн хушăмăрта, çапăçу хирĕнчен, пăшал пăрахса, нимĕçсем енне таракан çын кунта тăрать.

**Пурте** (*тĕлĕнсе ÿкеççĕ*). Тур çырлахах, Якур çавăн пек çын... (*Якур, Платон куçĕнчен пăхаймасăр, пуçне чиксе аяккалла пăрăнать.*)

**Платон.** Стой! (*Якур сÿрĕккĕн çавăрăнать*). Сутăнчăк! Мĕнле-ха эпĕ сана вилмеллех лектереймен.

**Лиза.** Каçар пире, Платон, эпир суккăр пулнă, пирĕн хушăмăрта нимĕçсем майлă ĕçлекен, нимĕçсен шпионĕ пурăннă... Эпир çавна сисмен (*Якура*). Кая юлтăн, нимĕç анчăкĕ. Пирĕн тылра нимĕçсем темĕнле пăтăрмах тума тăрăшрĕç пулĕ те, анчах эпир, тылра пурăнакан халăх, икĕ хут, виçĕ хут ытларах ĕçлесе, хамăр мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр!

**Платон.** Лиза, атя, кайса леçер çак ирсĕр сутăнчăка (*Якура.*) Ут! (*Якур утать, ун хыççăн Платонпа Лиза каяççĕ.*)

**Пурте:** (У-у, путсĕр çĕлен-калта!.. Сутăнчăк!.. Ирсĕр... (*тесе Якура ăсатаççĕ. Якур Матрӳне тĕлне çитсен, Матрӳне Якур питĕнчен лач сурать.*)

**Матрӳне** (*сурса*). Тьфу! Ирсĕр!..

ЧАРШАВ.

Цена 4 руб.

*Н. АЙЗМАН*

# ЛИЗА КОРОТКОВА

пьеса

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары—1945